Ç. ШĂПЂĂК

# ФОСФОРИТ

Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ
ШУПАШКАР 1931

Ç. ШĂПĐĂК

# ФОСФОРИТ

ĐĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар — 1931

## ФОСФОРИТ.

Стантсӑ умӗнҌен, вӑрман уҫҫипе курӑнаҭ пӑравус. Кӑлараҭ вӑл тӗтӗмне пит хуллен. Унӑн тӗтӗмӗ сарӑлаҭ вӑрмана. Хырлӑх вӑрманӗ ҫӑтаҭ тӗтӗме. Симӗсӗн-кӑвакӑн курӑнаҭ катаран. Пӑхма илемлӗ. АнҌах... шел. Пӑравус хусканмасҭ, тӑраҭ вырӑнтах.

— Ту-ту-ту-ту-ту!—хуллен ҫеҫ параҭ сассине.

Симӗс йалав вӗлкӗшет сылтӑмран. Мӗскершӗн вӗлкӗшет ку йалав? Мӗн пулнӑ? Никам та пӗлмеҫҫӗ стансӑра.

— Йулташсем! Пӑравус туртаймасҭ пойӑса. Вутӑ пӗтнӗ унӑн ҫул ҫинҌе. Васкӑр, йулташсем, пулӑшма! Йатӑр ҫакӑнтан,—тархасларӗ стантсӑра пойӑс кӗтекен халӑха, стантсӑ ҫуртӗнҌен тухса, шурӑ картуслӑ, хурарах, типшӗм, вӑрӑм ҫын. Стантсӑ умӗнҌи вутӑ купи саланҌӗ самантра. Вут сыпписем выҌарӗҫ алӑра. Пойӑс кӗтекен халӑх Ҍупрӗ пулӑшма.

— Паҫӑрах пӗлмен. Пӑхса тӑратпӑр ара. Паҫӑрах пулӑшмаллаҌҌӗ ҫакӑн пек,—пуплеҫҫӗ ҫул ҫинҌе пӗринҌен пӗри ӑмӑртса иртсе.

— Ҫавӑ кирлӗ сире. Нумай курӑрха малашне.

Вăт, сире Совет!—харкашса йулђĕ стантсă умĕнђе пĕр лайăх тумланнă, вăтам çын.

Пăравус тĕтĕмне вăйлатрĕ. Симĕс йалав вĕлкĕшмест ун çинђе. Анђах килеймест кунталла. Ђĕре вăйĕ хавшанă пĕтĕмпех. Çу çук ђĕрере.

Вутă леçнĕ халăх ђупаĭ кайалла. Çитрĕ хашкаса стантсăна.

— Мĕн тăвас?!

— Мĕнпе тултарас?!

— Шыв çук пăравусăн!

— Шыв кирлĕ!

— Тавайăр пиђке!

Пăравусăн тĕтĕмĕ вăйсăрланђĕ. Симĕс йалав вĕлкĕшет таттисĕр. Правус хăй шарламасĭ, шăпах. Шăхлиђă çеç сухăраĭ ун çинђе вĕçĕмсĕр. Йулашки самант. Хăрушă самант. Хăшĕсем пĕрене, теприсем вутсыппи—васкаса пăрахаççĕ урапасем айне. Унсăрăн çăлма çук пойăса. Кайаĭ вăл анат йенелле—Ађђа расйесне.

Стантсăра ĕçлеççĕ пурте ђун хурса. Икĕ пиђке тултарђĕç шыв васкаса. Стантсăна пынă лав çине тийерĕç. Анђах... ĕç тухмасĭ. Лавăçăн лаши хăраĭ, туртмасĭ. Ђакнăçемĕн ђакаĭ.

—Но-о-о! Хăйамат!—çапрĕ лашине лавçă çилленсе.

Тилхепе вĕçĕ пушшех пăсрĕ лашана. Лаша выртрĕ. Лаша тапранаймасĭ.

— Тавай тăварас!
— Тавай туртатпăр!
— Тавай!
— Тавай!
— Тавай!

Лаша ҕĕтресе кăна йулҕĕ хăраса. Вуниккĕн кўлĕннĕ, икĕ пиҕкеллĕ урапа кайрĕ пулăшма. Шпал та—шпал мар. Релс та—релс мар. Васкавлă пулăшу. Пурнăç шўрпи.

Шăхлиҕĕ ҕарăнҕĕ шăхăрма. Симĕс йалав та пытанҕĕ шалалла. Вĕлкĕшсе вăл хăратмасӑ халăха.

Пăравус хуранĕ ҕашларĕ сывлăмпа. Урачисем хускалҕĕç вăй илсе. Пĕренесем, вутсыпписем сирĕлҕĕç çул çинҕен. Халăх никам йулмарĕ ирĕке.

— У-у-у-у-у!—кăшкăртрĕ пăравус савăнса. Унăн сасси йантрарĕ вăрмана. Хуллен те çинçен çухалҕĕ катана.

— Тăпăрт-тăпăрт-тăпăрт-тăпăрт!—ташларĕç вакун урачисем пăравус хыçĕнҕен.

— Ши-и-и-и!—шăхăртса кăна йулҕĕ тимĕр çул.

Сарă-йаштак хырсем пуç тайрĕç пойăса. Кăтра пуçлă хурăнсем авăнҕĕç пилĕкрен. Çатăлти ăвăссем алă çупрĕç савăнса.

— Ырă çул пултăр! Ырă çул пултăр!—ырă сунҕĕç пойăса.

— У-у-у-у у!—тав турĕ пăравус тепĕр хут.

Унăн сасси каллех йантрарĕ вăрмана. Каллех хуллен те çинçен çухалтĕ катана.

Вăрнар стантсийĕ. Ваксал çуртĕ.

— Тут-тут! Хăш-хăш! Хăш-хăш-ш-щ! Пăш-ш-ш! тарăнтĕ пăравус.

— Шăнкăр-шанкăр! Шăнкăр-шанкăр!—перĕнтĕç пĕр-пĕрне пуфĕрсем.

Ик-виçĕ çын васкамасăр тухрĕç стантсă çуртĕнтен. Кутамккисене çакрĕç çурăм хыçнелле. Антĕç пойăс патнелле.

— Васкамасан та йурать. Тасах кайакан марха,—пуплесе илтĕç пĕр-пĕринпе.

— Ай, йăлт ывăнтартĕ. Икĕ кун килтĕмĕр, Хусантан...

— Ни вутти... Ни шывĕ...

Çапла пуплесçĕ пойăс çинтен аннисем. Тепĕр хут пăхса илесçĕ вакунсем çинелле.

— Çурран утнă пулсан—маларах çитмелле,— пуплесе утасçĕ ваксал йенелле.

— Лав кирлĕ мари?!

— Пирĕн патăртисем мари есĕр?!

— Ларăр хамăнни çине...

— Ман тăрантас лайăх...

— Лаши лайăх йуртать манăн...

— Кунта кил, кунта!

— Ăçтисем есĕр?!

Пойăс çинтен аннисене утма-тăма памасçĕ лава

пынӑ стариксем. Кашни хӑйпеле лартасшӑн. Ара... пӑртакҫӑ укҫа тупасшӑн.

— Йерипен хӑвала. Хытӑ ан ҫуптар,—вӑрахӑн калаҫса хӑпарса ларҫӗ сарӑ сухаллӑ, вӑтам ҫынӑн ҫӗтӗк тӑрантасӗ ҫине лайӑх тумланнӑ пӗр вырӑс.

— Ай, Ваҫу-ук! Йепле ҫитрӗн, аҫам?—хӑрах уралла, икӗ патак ҫине уртӑнса пыракан ҫамрӑк салтака ыталаса илҫӗ хура хӑватлӑ, ҫавра питлӗкуҫлӑ пӗр ҫамрӑк арӑм. Унтан шӗкӗлтетсе, пуплесе утрӗҫ хӑрӑк хыр тункатинҫен кӑкарнӑ пӑвӑрлӑ лаши патнелле. Лаши, те хуҫине палласа, сасартӑк пӑхрӗ Ваҫук ҫинелле. Хӗпӗртенӗ пек, хурланнӑ пек, кӗҫенсе илҫӗ вӑрттӑн сасӑпа.

— Сывӑ-и, сывӑ-и?! Паллаӗ пулаӗ ӗнтӗ ку мана,—сӑмах хушса илҫӗ Ваҫук лашипе. Лаша каллех пуҫне усрӗ те, ҫиме пикенҫӗ лӑпӑ ҫинҫи утине.

Пӑравус шарламасӗ нимӗн те. Сывламасӗ. Кӗҫенмест. Ывӑннӑ. Муҫисен кӑвак лаши ҫаплаҫҫӗ вӑрмантан ывӑнса тавӑрӑнсан.

Хӗрлӗ сӑрпа сӑрланӑ вакунсем те ҫавах ҫӗнмеҫҫӗ. Вӗсенӗн те сасси ҫук нимӗн те. Алӑксем уҫах, хупӑнман. Йӑвӑр вӗт. Таварни вакунсем.

Стантсӑ лӑпланҫӗ. Нимӗнле сасӑ илтӗнмест стантсӑра. Кайӑк сассисем кӑна йантраҫҫӗ вӑрманта. Шӑпҫӑкӗ хуҫкалаӗ тем тӗрлӗ йуррине. Куккукӗ ҫураӗ вӑрмана. Тата та нумай унта ка-

йăксем. Вĕсенĕн илемлĕ йуррисем каймаҫҫĕ хăлхаран.

Лайăх вĕт вăрманта?—ыйтрĕ ҫĕтĕк тăрантас ҫинҙе ларса пыракан вырăс сарă сухаллă лавăҫран.

— Епĕр... вĕреннĕ те... асăрхамастпăр. Сывлăш уҫăрах пек,—тавăрса хуҙĕ сарă сухал ўркенсе.

— Тусанлă хула Хусан,—йусанарах ларҙĕ вырăс.

Симĕс те сарă ҙеҙексем йăлтăртатаҫҫĕ ирхи сывлăшпа. Шăрҫаланнă кăкăрĕсем ĕмеҫҫĕ уҫă сывлăша. Ҫемҫенĕн шăлаҫҫĕ питрен ҫулĕҫсем. Ҫураҫҫĕ сăмсана вĕсен шăршисем. Тухассăм килмест вăрмантан. Тухмăттăм тем парсан.

Уйра йăлтах урăхла. Ҫуллахи шăрăх парăнмаст ниМĕнрен. Вăл хăй ҫеҫ парăнтарать пурне те. Йешĕл симĕс курăксем ҙăтаймаҫҫĕ хĕвел хĕртнипе. Кăтра ҫилхеллĕ ыраш уйĕ те савăнмасть хумханса. Ҫуртри пусси те хурланнă, шарламасть. Шăрăхпа хунайман сĕлĕсем салхуллă. Хĕпĕртемелли курăнмасть нимĕн те.

Хура пусă выртать хуп-хурах. Ҙĕлтĕрти курăксем кăна лараҫҫĕ ҙĕтренсе. Кĕтў кĕтеҫҫĕ унта кун хутах. Ĕнесем выҫă, сурăхсем макăраҫҫĕ. Ҫимелли ҫук нимĕн те.

Сăр вăрманĕ хыҫĕнҙен курăнаҫҫĕ кăвак пĕ-

лĕтсем. Анҫах ҫитеймеҫҫĕ вĕсем пирĕн ҫине. Тухаймаҫҫĕ вăрмантан уйалла. Шăрăх виҫесĕр хĕртнипе, саланаҫҫĕ вăрман ҫийĕнҫех.

Пĕр ҫил аҫисем кăна ташлаҫҫĕ уласа. Вĕҫĕмсĕр лараҫҫĕ тусан йуписем. Ахăрса пĕтĕрĕнсе кармашаҫҫĕ, пĕлĕте. Тискер. Хăрушă.

— Ҫăмăр ҫумасť пуљ кăҫал?—ыйтрĕ сар сухаллă лавăҫă, хăйĕнпе ларса пыракан йулташран.

— Парометтăр ҫумалла кăтартаť. Ҫумаллах ҫак кунсенҫе. Уйар пуласран хăрамаллийех ҫук, хуллен те, кахаллăн тавăрҫĕ лавăҫа йулташ.

Лавăҫ тата пуплесшĕнҫĕ. Анҫах пыраť вăл ҫывăрса.

— Ĕшеннĕ пулас, шеремет,—терĕ ҫурма саспа лавăҫă. Хăйĕн ҫӳрен кĕсрине хуйхатрĕ пушă вĕҫĕпе.

— Но-о-о! Лĕпсĕртет аналалла!

Аналалла нумайах пымарĕ. Ҫавăнпа та ҫӳрен кĕсре те вăрăмах йуртаймарĕ. Каллех тăвалла. Ҫул тумхахлă. Ҫуптарма йăвăр.

— Васкарах уткала. Шăрăх пусса ҫитет. Шăрăхҫен ҫитес!—лавăҫ хыттăнрах каларĕ. Анҫах йулташ туймарĕ. Ватăлнă тăрантас сăпкари пек ҫывăртрĕ: силлерĕ, лăпкарĕ, ҫĕтретрĕ. Канăҫлăх ҫеҫ пулҫĕҫ кăсем йулташшăн.

«Кама илсе килепши? Камши ку? Мĕн патаккисемши кăсем? Арҫинҫе мĕскерши? Неушлĕ

мишавайа тийесе килетĕп? Неушлĕ çĕр виçме килет ку? Уҕҕитлĕ марши? Çук, уҕҕитлĕ пулас çук»—пĕрре йулташĕ çине, тепре арҕи çине пăхаť. Анҕах пĕлеймест ун урапи çинҕе кам иккенне сарă сухал лавçă.

Шкул умне тăратрĕ кĕсрене лавăç. Çаплах вăранмасť йулташ, çывăраť.

— Вăратас пулаť ăна. Кунта хĕвел çи вĕт,—пăвăрлă лашине тăратрĕ Ваҕук шкул умĕнҕен иртсе.

Вăратса кĕртрĕ Хĕветĕр йулташа шкула. Анҕах пĕлеймерĕ вăл кам иккенне.

— Кам пĕлтĕр?—терĕ çӳрен кĕсрине çавăрса Хĕветĕр.

* * *

Кунĕн-çĕрĕн шкултан халăх татăлмасť. Уҕҕитлĕрен те ыйтаççĕ. Хусан çыннине хăйне те кураççĕ. Унтан та ыйтаççĕ.

— Йăрар тăвĕпе Ишек тăвĕсене пăхса тухмалла манăн,—тет ыйтакана Хусан çынни. Анҕах мĕншĕн пăхмалла? Мĕн шыраť вăл унта? Татса каламасť нимĕн те.

— Мĕн шыраттăр унта?—ыйтаççĕ темĕн пек пĕлесшĕн.

— Кирлĕ йапаласем пур унта,—урăх нимĕн те шарламасť. Мĕне кирлĕ йапала? Мĕн ваҕҕи? Никам та пĕлмест!

Пĕр ерне пăхса çӳрерĕ уйсем тăрăх Хусан ҫынни. Тăпра катăкĕсене тыта-тыта пăхаҫ̆. Вĕсене арҫа çине пуçтараҫ̆. Вĕсем çинҫен сыраҫ̆ хут çине. Тăпра катăкĕсемшĕн хĕпĕртет, кулаҫ̆, савăнаҫ̆.

— Çаксем ĕнтĕ вĕсем пире кирлисем,—алли çине илсе кăтартаҫ̆ хăйпе пĕрле çӳрекенсене. Ҫăмăртаттараҫ̆. Çĕре те пертерет. Анҫах каламасҫ̆: вăл мĕн иккенне.

Пĕр йал çинҫе кăна сарăлман ун çинҫен хыпар. Таврари йалсем те пĕлеççĕ ун çинҫен. Анҫах кам вăл? Мĕн шыраҫ̆? Мĕн кирлĕ ăна? Никам та татса калаймасҫ̆!

«Таçти çĕр улпуҫĕ тет вăл. Кунта ларма вырăн йышăнасшăн. Лайăх вырăн шыраҫ̆ пирĕн уйсенҫе» тенĕ хыпар сарăлҫĕ йалсенҫе.

Ку хыпар сарăлнă хыççăн пуйансем çӳре пуçларĕç шкула. Кашни усă курасшăн ырă çын кăмăлĕпе.

— Тархасшăн ху патна ил мана,—кĕрсе тархасларĕ пĕр каçхине авалтан сутуилӳ тăвакан măклă сухал Иван Петравҫă.

— Хамах ĕçлетĕп,—пĕртен пĕр сăмахпа касса татрĕ măклă сухал Иван Петравҫа.

Иван Петравҫă кăмăлсăр тухрĕ «хуçа» патĕнҫен. Çиленнĕ пек пулҫĕ кун çине.

— Лайăх çуртсем кирлĕ мари сире?—пырса

ыйтаççĕ кашни кун пуйансем.—Йӳнех паратпăр. Хамăрах выраннех турттаратпăр,—пырса йăпăлтатаççĕ сутлăх хатĕрленĕ çуртлă хуçасем.

— Ĕçе тапратсах йарсан, çуртсăр май килмест. Анђах, халех кирлĕ мар. Кирли... Кирлех пулаŧ ĕнтĕ вăл. Рапођђисем çуртсăр пуранаймĕç,—ответлесе кăлараŧ «хуçа» хуçасене.

«Рапођђисем» сăмах питĕ те тĕлĕнтерђĕ таврари йалсене. Пурте хăраса ӳкрĕç сасартăк.

— Рапођђисем илсе килмелле. Пире ваљљи çĕр те хăвармасŧ. Пире мĕн усси пур. Çĕрне хăй вăйĕпе ĕçлемелле. Хăвалас, вĕлерес!—кăшкăрашма тапратрĕç халăх пуххинђе.

— Калатăн тăк кала? Халех кăнтатпăр! Есĕ кам?—йарса тытрĕç кăкăртан уйрах куштансем «хăйсен тăшманне».

— Епĕ, иншенер Штутсĕр. Сире мĕн кирлĕ?—йăпатса, вăрахăн, кăмăллăн ответ пађĕ «тăшман».

Кашкăрсен çăварĕсем хупăнђĕç. Ђĕрнисем тавăрăнђĕç ӳт çине. Пăхаймарĕç урăх çын çине. Намăсланђĕç.

— Мĕн шыраттăр ара кунта есĕр?—ыйтрĕç питĕ намăсланнă, хăйусăр сасăпа.

— Сире ваљљийех, çĕр пурлăхĕ.

Палламан çын кам иккенне пĕлеççĕ йалсенђе. Вăл: иншенер Штутсĕр. Анђах шикленеççĕ пуйансем. Хăйсем усă курас çĕр хыснана кайаŧ

вěт. Вěсем ку вырăнсенҫе мěн ҫухлě тара илеç-çě. Мěн ҫухлě усă кураççě. Халҫ вăл лекмест нимěн те вěсене. Çавăнпа та урăх хыпарсем сарма тытăнҫěç йалсене.

— Пирěн йала куçармалла тет ку вырăнтан!— кăçкăраççě пухусенҫе вěсен çăварěсем.

— Хысна тӳлет тěк, ма куçас мар?!—хирěç-леççě ҫухăн çуртлисем.

— Тӳлет сана хысна?!

— Шанăр хысна çине!..

— Çунтармалла тет ҫухăн çуртсене,—парăнтараççě ҫухăнсене çак сăмахсемпе пуйансем. Камăн çунтарас килет пурлăха вăхăтсăр. Ҫухăнсем кайаççě иншенер патне. Тархасласа ыйтаççě тӳррипе калама.

— Ун пек, кун пек çук. Апла пулма пултараймасť,—тăнлантарса йараť иншенер.

«Кунне çирěмшер пăт ылттăн тупаť. Каçпала таçта ăсатаť тет лавпала»тенě сăмах сарăлҫě çын çине.

Уйрăм хурал уйăрҫěç сыхлама. Ернене йахăн сыхларěç. Анҫах кушак иртнине те курмарěç хуралçăсем. Ěшеннě иншенер çывăраť, хусканмасť.

Кунта та ěç тухмарě. Темěн тěрлě авăртаççě йалсенҫе. Пěр йалта илтнине ăсатаççě васкасах çумри йалсене.

Пĕҫĕкҫеҫҫĕ, турă лашапа пырса кĕҫĕ йала пĕр хурарах, ҫамрăк та маттур каҫҫă. Йал хапхинҫен кĕрсенех курҫĕ уйри Ваҫлийе.

— Сывă-и, Ваҫли хăта?!

— Сывă. Инҫете-и?!

— Инҫети... инҫетех мар. Лаша сирĕн йал касуне хутшăннă та... пайан тин тупрăм. Кунта ҫитнĕскер тата... кĕрсех пĕлтерес, терĕм.

— Тем хыпар тата ĕнтĕ?

— Кĕҫĕр каҫ лаша шыраса ҫӳретĕп Йăрарта. Мăкăр-мăкăр-мăкăр,—тунă сасăсем илтĕнеҫҫĕ. Пĕтрĕм. Вăрăсем пулҫĕҫ кусем. Тинех ҫаклантăм, тесе лăпах выртрăм ҫĕр ҫумне. Итлесе выртатăп: ҫăнкăрт!—тутараҫҫĕ темĕскер. Нумайҫҫен ăнланаймарăм. «Мĕн ку» тесе выртрăм. Вĕсем иншенерпе такамсем пулнă. Ылттăн тултараҫҫĕ ҫав хăрăк тунката кутĕнҫен. Хутаҫҫисене тултарса ҫитерҫĕҫ те: «ну, пурăнатпăр кунпала» терĕҫ. Унтан вара ҫырма тăрăх шăвăнҫĕҫ анат йенелле. Вĕсем хыҫĕнҫен епĕ те пĕр ҫиҫĕ-сакăр катăк тупрăм ылттăнне. Хам ĕмĕре пурăнма ҫитет...

— Каҫсенҫе лавсемпе турттарнă, теҫҫĕ. Ҫăнах еппин вăл хыпар?

— Ара... ҫăн пулмасăр. Ун ҫухне те пирĕн атте курнă. Халăх ҫине тухнă сăмах суйа пулати?

— Ку милитси ҫав ĕҫпех мар пулҫ теха?—

йал хапхинҫен кӗрекен милитси ҫинелле кӑтартрӗ йуланута Ваҫли.

— Сывӑ!..—тапӑрларӗ лашине халапҫӑ.

— Ан тар!—милитси те вӗҫтерҫӗ йуланут хыҫӗнҫен.

Анҫах милитси ҫитеймерӗ. Йуланутӑн хӳри ҫеҫ курӑнса йулҫӗ милитсийе.

— Сирӗн йалта пытанса пурӑнать вӑл. Сан патӑнтан тухмари? Есӗ усрамастӑни ӑна? Кала тӳррипе! Мӗн шӑлна йӗрсе тӑратӑн? Тата кам пур сан патӑнта? Кала!..—утма тӑма та памасть милитси Ваҫлийе.

Ваҫли тӑрать пӗр вырӑнта. Сасартӑк милитси ҫыпӑҫнинҫен тӗлӗнҫӗ пӗтӗмпех. Сарӑ, сарлака сухал ҫеҫ вӗҫет унӑн йапшар ҫилпеле. Хӑй хускалмасть нимӗн те. Вилнӗ пек тӑрать. Йаланах хӗп-хӗрлӗ тулли пит-куҫ салхуланҫӗ самантра. Ҫуллахи тарлӑ кӗпепе танашрӗ унӑн сӑн-сӑпат. Вӑрӑм та, сарлака кӗлетке пӗршӗнҫӗ хӗснӗ пек.

— Калатӑн тӑк, кала! Не хоҫҫӗш?!—вуҫверпе тӗллерӗ милитси Ваҫлейе.

— Тавҫӑрса илеймерӗмха, хоспотин милитси!—арантан аран сӑмах хушрӗ милитсийе Ваҫли.

— Ҫав теҫерттир сан патӑнта пурӑнати? тетӗп.

— Мӗнле теҫерттир, хоспӑти... Ҫимха, хоспотин милитси. Вӑл теҫерттир пулсан, тавай хамӑр лашапах...

— Апла йăпăлтатса тăратни тата... Тата кам пурăнаҫ сан патăнта? Миҫен пурăнаҫҫĕ? Айта хăвăр пата!..

Анҫах, унҫҫен те пулмарĕ, паҫăр ҫеҫ Ваҫлипе пуплесе тăнă йуланут курăнҫĕ урам кĕтессинҫен. Икĕ йенҫе милитси. Вĕсен револьвĕрĕсем пăхнă ун ҫине.

— Ăҫта кунта ҫелсовет?

— Айтăр кунтан!

Уйри Ваҫли йертсе кайрĕ виҫĕ милитсийе йалсоветҫĕ патне. Икĕ милитси икĕ йенҫе. Тепри хыҫĕнҫе. Варринҫе пыраҫ йуланут салхуллă.

Пуҫне уснă вăл ҫĕрелле. Пăхмасҫ ҫын ҫине. Паҫăр кăна илĕмлĕ питкуҫ—ҫухатнă хăйĕн тĕсне. Ҫирлĕ.

Йалсенҫе тĕрлĕрен хыпарсем сарăлнине тăнламасҫ иншенер. Кашни кун ĕҫлет вăл хăй ĕҫне. Кашни кунах пуҫтарса пыраҫ шкула кăвакрах, шурăрах тăм татăкĕсем. Шкула йăлтах тултарҫĕ тăмпала.

— Тула хурас пулаҫ ку тăмсене,—терĕ пĕрре шкул пуҫлăхĕ Штутсĕре.

— Тула?.. Ҫавăн пек ылтăн куписене тула?.. Хм... Тула?.. Ҫавăн пек ылтăн куписене тула? Хм...—иншенер ҫак сăмахсемпе ҫылайҫҫен тĕлĕнсе тăҫĕ тăм купи умĕнҫе.

— Тула? Ҫӑмӑл калама. Тула?.. Ылтӑна тула?—шуралса, хӗремеслenсе илҌӗ темиҫе хут.

— Ахалҍ кӑна каларӑм,—хӑй те темӗнле, киҌемленнӗ пек пулса ҫавӑрса йаҌӗ иншенер кӑмӑлне уҌҌитлӗ.

— Тоттӑ. Тытса пӑхӑрха ҫак катӑкне. Тата ак ҫакна. Ак, ҫакна та. Ак, куна. Ылтӑн вӗт. Ҍӑваш хушшинҌе ҫакӑн пек ылтӑн. Ҫакна тытса пӑхӑр тата. Ак ҫакна. Ак кун йышшине... Ак..

Иншенер, хӗпӗртенипе, уҌҌитле пӗр ҫӗклем йӑттарҌӗ тӗрлӗрен тӑм татӑкӑсем. УҌҌитлӗн шурӑ кӗпи пӗтӗм тӑм пулҌӗ. «Ӑҫтан килсе перӗнсех кун патне»—шухӑшласа илҌӗ ӑшӗнҌе. АнҌах нимӗн те Ҍӗнеймерӗ иншенере хирӗҫле. Мӗншӗн тесен, иншенер кашни сӑмахах мӗнпе те пулин йе хирӗҫлеме, йе мухтама йуратаҭ. УҌҌитлӗ те ун хыҫӑнҌен «ылтӑн» тенӗ пулсан, вӑл уҌҌитлӗ хӗвне те Ҍиксе йама пултараҭ виҫ-тӑват катӑк. Хирӗҫлерех каласан—ҫиленет ҫавӑнтах. «Ҍӗнмесен луҌшӗ»—шухӑшласа тӑҌӗ уҌҌитлӗ.

— Вӑт ҫакна шӑршласа пӑхӑрха. Тӗлӗнмелле шӑрш перет кунтан. Ҍӑваш хушшинҌе ҫакӑн пек ылтӑн... Ҫӗртен шӑрш кӗнине нихӑҫан астӑвмастӑп епӗ. Тӗлӗнмелле шӑрш. Ҫапла вӗт?—уҌҌитлӗн аллисем пушӑ маррине кура, сӑмсаран пырса шӑршлаттарҌӗ иншенер уҌҌитле.

— Ђак! ђа-а-ак!—тăм катăксене пăрахах тухса тарђĕ уђђитлĕ.

— Что Вы?.. Что Вы?.. Такое золото... в Чувашии...—уђђитле шăршлаттарнă тăма йерипен, майлаштарса хуђĕ урайне иншенер. Унтан, хăйĕн аллисене сăмса тутрипе шăлса, тепĕр хут шăршларĕ тутрине.

— Ылтăн. Ђăваш ылтăнĕ...

Шкула кирек текам пырсан та, тӳрех тăм купи патне илсе пырат иншенер. Анђах никама та тыттарса пăхтармаст. Хăй илсе, хăй аллипе кăтартат.

«Ђăваш ылтăнĕ»... кирек хăçанхи унăн йулашки сăмахĕ.

Паккет пама кĕђĕ пĕрре ирхине уђђитлĕ. Уйри пек кашласа лараççĕ шкулта симĕс калђасем.

— Мĕн?—тĕлĕнђĕ уђђитлĕ.

— Кунтарах килĕр. Вăт ку кăвак тăм çинђе,—çавăртса кайма тытăнђĕ иншенер уђђитле калђасем патнелле.

— Сире паккет! Васкатăп!—хыпаланса тыттарђĕ уђђитлĕ иншенере. Каллех шăрăшлаттарса çӳресрен хăранипе, урăх калаçмарĕ. Вăшт! кăна турĕ шкултан.

---

— Шкул тулли тăм тултарнă. Урайне тĕрлĕрен тырă акнă. Шкул кăвакарса кайнă. Урайĕ

çĕр çумне лапђăннă. Шкула пĕтерет. Ку шкула çĕртсе йарсан мĕнле пурăнăпăр? Хăваласа йарас пулаť ăна шкултан. Таçтан килнĕ вырăс ђăвашран мăшкăлаť. Намăс пире,—кăшкăрђĕç виçĕ-тăвата саса пĕрре, йал ампарĕ умĕнђе, халăх пуххинђе.

— Хăвалас мар! Ĕçлетĕр!—харăсларĕç тўрĕ пилĕклĕ сăхмансем.

— Есĕрех пĕтеретĕр йала. Есĕр кăна пăтрататăр йал хушшинђе. Çĕлес пулаť пĕртак çăвар хупписене!—кăшкăрђĕç сулахай йенђен, пуçарнă сасăсем.

— Айтăр, шкула!

Мĕн пур пек халăх утрĕ шкула. Хăшĕсем хăваласа кăларма, теприсем шкулти калђасенс курма, ђылайĕшĕ «ыт ахаљтен» йумахласа пырса кĕђĕç шкула.

— Килĕрех, килĕр... килĕр! Ак ку вăт шурă тăм çине акни. Ку сарă тăм çине акни. Кăсем кăвак тăм çине... Ылтăн вĕт, ылтăн....—хĕпĕртесе кăтартма тытăнђĕ иншенер.

— Ку тăмĕсене тула кăларсан та йураť. Шкула çĕртететĕр вĕт!—пуçларĕç паçăрхи сасăсем.

— Тула? Ылтăна тула?.. Хм... Ылтăна-и?.. Ну-у-у-у. Хм,—кулнă пек пулђĕ иншенер сасăсене хирĕç.

Урăх нимĕн те ђĕнеймерĕç иншенере хирĕç хирĕçме пынă сасăсем.

— Ак кăсене хура çĕр çине акнă. Кăсене хăйăр çине акса кăвак тăмпа хутăштарнă. Ак, кăсене... Вăрлăхĕсем пĕр вăрлăхах. Кăсем патвартарах. Кăсем вăн нађар. Кăсем... Ылтăн вĕт. Сирĕн уйрах пулнă ылтăн. Есĕр сисмен те. Кăсем...—татти-сыпписĕр ăнлантарма тытăнђĕ каллех иншенер.

— Ку, вăт, йăвăртарах. Ку çăмăлтарах. Кăна пĕр вырăнта, кăна тепĕр вырăнта тупнă. Кунта нумайрах пулас пулаť ĕнтĕ...—тăм катăкĕсем патне илсе пырса тăнлантараť «тăм хуçи».

Тăк-тăк тĕксе илеççĕ пĕрпĕрне ђавсасемпе шкултан хăвалама пынисем. Темĕн сăмах хушасшăн кармашаççĕ малалла. Пĕрпĕрин çине пăхса илеççĕ вăрттăн куçпала. Анђах нимĕн те ђĕнеймест никам та.

Ни курма мар, ни хăвалма мар, «ыт ахаљтен» пынă халăх алăк патнерех. Вĕсем пĕрпĕринпе йумахлаççĕ «ыт ахаљтен». Тăмсем çинђен, калђасем çинђен асине те илмеççĕ. Пĕрмай ђĕлĕм ĕмеççĕ. Ђĕлĕм тĕтĕмĕ йавăнаť пĕлĕтле. Ункăн-ункăн хитре пулса кашнин умне çывхараť. Çĕлен пекех йавкаланса лăнкăр-лăнкăрт çăттараť. Аша тулса сывлăш пўлсе ăнтăхтарса сывлатаť. Ахăм, кăххăм ĕсĕрттерсе тĕрлĕ йумах туптараť.

— Сан тапак лайăхрах пек. Ман кăвакарнă та... Парха пĕр ђĕлĕмĕш!..

— Ме, те... Сахаланнă пулас...

Ҫын тапакне хĕрхенмесĕр пуса пуса тултарат̆. Йулташ панă хутаççине çине тăрсах пушатат̆.

— Ан туртăрха вăл усал тапака тархасшăн,— ĕсĕре-ĕсĕре тархаслат̆ Ҫемен.

— Е-е-ей, пулат̆ кам етем. Пĕрре вĕреннĕ йапалана ăçтан пăрахатăн,—тĕтĕмне Ҫемен çинелле йарса халаплат̆ кăвакарнă тапак туртакан.

Шкултан хăваласа кăларма пынисем вăрахăнах ђака-ђака çывхарђĕç ђĕлĕмсем çумнелле. Пĕрерĕн-икшерĕн тухрĕç тулалла.

— Пĕрик катăкне илмеллеђђĕ тăмне,—терĕ пĕри.

— Хамăр тупаймастпăрим?..

— Тĕсне пĕлмеллĕх илмеллеђђех пĕр катăк...

Тепĕр хут шкула кĕрсе илсе тухрĕ пĕр катăк тăм «хăваламa пынисенђен» пĕри.

— Никам та сисмерĕ,—мухтанђĕ тулта, йулташсен умĕнђе.

Курма пынисем ытараймасăр пăхаççĕ калђасене. Вĕсен хастарлăхне кура, çине тăрса ăнлантарат̆ иншенер.

— Ылтăн вĕт. Сирĕн уйра пулакан ылтăн. На, çакна тытса пăхха. Ак çакна тата. Ак куна. Ак

çак хаклăрах, маншăн. Ак...—вĕçĕмсĕр тыттарать кашнине тĕрлĕрен тăм катăкĕсем.

— Тĕлĕнмелле. Ђăваш хушшинђех вĕт ылтăн. Ку таранђђен те çавна сисмен... ђунтан хĕпĕртет урайĕнђе выртакан тăмсем çине пăхса иншенер.

— Пĕр катăкне илме йурати ађасем ваљђи?— ыйтрĕ пĕри хăй аллинђи тăма кăтартса.

— Что Вы? Что вы?—хыпаланса илсе хуђĕ ыйтнă çын аллинђен тăм катăкне урайне иншенер.

---

Тăм катăксене ытла та йуратни питĕ те тĕлĕнтерђĕ курма пынă халăха. Пуринђен ытла калђасем тĕлĕнтерђĕç. Калама çук патвар. Уйра нихăçан та пулман çавăн пек.

Тăм катăксене, вĕт ђулсене иншенер ытла та йуратнине кура, йал халăхĕ те пуçтарма тытăнђĕ вĕсене.

— Çынсен ађисем кашни кун кайса пĕрер кĕсйе тултарса илеççĕ. Санăн пур... Урам хушшинђе лĕртлетерсе иртереççĕ вăхăта. Ма кайас мар çавăнта. Пире, мăннисене, намăсрах хăть,— ӳпкелешме тытăнђĕç харпăр хăй ађисене ашшĕамăшĕсем.

— Хăшин-хăшин кунне икшер хутлаççĕ, тет.

— Пĕр пӳлме тултарнă тет хыçалти куммасен ађисем.

— Ђăн-ђăн ылтăннех тупнă, тет пирĕн куккисен Петĕрĕ. Ђышкă пысăккăш пур, тет ылтăнĕ.

Çак сăмахсене ђăтаймасăр ваттисем те, йашшисем те, хĕрарăмсем те çине тăрсах тытăнђĕç Йăрар çырмипе Сакай çырмисем таврашне çӳреме.

— Ана пуçĕнђен çул тăваççĕ те, çавна кайса ђакаларăмха,—тавăрнат̆ пĕри тимĕр кĕреçепе Сакай çырми пуçĕнђен.

Хĕвел хĕртсе пĕçертет пулин те, çĕнĕ сăхманпа. Икĕ кăсйинђе тулли вĕтĕ ђулсемпе тăм катăкĕсем. Анђах хирĕç пулакансене палăртмаст̆ вăл вĕсене.

— Сысна çурисем çухалнă та... Çавăнталла кайнă пуљ терĕмĕр те... Тупаймарăм... Çук.

— Пирĕн те путек çĕтсе йулнă кĕтӳрен... Икĕ кун шырарăм ĕнтĕ çакăнта. Епĕ те тупаймарăм... Çук... Шырама та пăрахас пуљ ĕнтĕ текех...—ђăсса, вăрахăн пуплесе тавăрнаççĕ арăмсем пĕрпĕринпе Йăрар çырминђен. Саппанĕсене çавăрса çыхнă шурă, вĕтĕ ђулсемпе. Пĕрпĕринне лайăх кураççĕ мĕн пуррине. Пĕлеççĕ мĕншĕн килнине. Анђах ŋарламаççĕ ун çинђен. Вăтанаççĕ пĕри пĕринђен.

«Иншенер тарнă тет ĕнер каçхине. Калҫисене уҫҫитлĕ каҫакисене çитерсе йанă, тет. Ҫулĕсене, тăмĕсене пăрахсах хăварнă, тет. Ара, ылттăнне пăрса илнĕ тет те тăмĕсем ăшĕнҫен. Вара. тăмĕпе мĕн тăваӑ вăл».—пуплеççĕ ирхине кĕтӳ хĕрринҫе арăмсем.

Кĕтӳ хĕрринҫен тавăрăнсан ҫылайăшĕ тăм катăкĕсене вĕри шывсемпе йĕпетсе пăрҫĕç шăлапир витĕр. Ала витĕр те йухтарҫĕç хăшĕ пĕрисем. Анҫах, нимĕнле ылттăн та тупаймарĕç тăм çинҫе.

Йăрар çырми, Сакай çырми, Ахрат çырми таврашĕсенҫе ĕçлерĕ Штутсĕр иншенер. Çав вырăнсенҫен турттарҫĕ тĕрлĕрен тăм катăкĕсене, вĕтĕ шурă ҫулсене. Темĕн ҫул йуратаҫҫĕ вăл вĕсене. «Ҫăваш ылтăнĕ. Ҫăваш ылтăнĕ».—мухтаҫҫĕ тăмсене. Анҫах, сасартăк тарҫĕ вĕсенҫен. Пăрахсах хăварҫĕ вĕсене. Нимĕн те пуçтарман. Уҫҫитлĕ тасаттарҫĕ вĕсене шкултан.

Уҫҫитлĕ шкултан тасатнине кура пĕри те пĕри тухса тăкрĕç тăмсене. Хăшĕ пĕрисем кăмакисене шăлтарҫĕç çав тăмпала. «Асăнмаллăх пултăр» терĕç пулмалла.

Уйра вĕтĕ ҫулсене курсан та пуçтармаӑ никам та. Тапса кăна хăвараӑ çилленсе.

Хулленех манҫĕç «Ҫăваш ылтăнне». Ăмсанмарĕç текех унăн пурлăхне.

— Ӑмран ӑҫтан ылтӑн пултӑр?—пуплесе илетҫӗҫ сӑмах пуҫласан хӑшӗ пӗрисем.

— Ахаҫ мари ҫак...—витетҫӗҫ теприсем.

*
* *

Никам та асӑнмасӗ Йӑрар таврашне. Камӑн анасем пур—кайса курат унталла. Ана ҫук—кайса та ҫӳремест. Ҫитменнине тата ҫӗрӗ те пахах мар. Тӑмлӑ, ҫуллӑ, хӑйӑрлӑ.

— Акапуҫ тимӗрри лайӑх ҫуталат ҫав. Хӑйӑрпа вӗтӗ ҫул шӑлса кӑна пыраҫҫӗ тимӗре.

— Пӗр ҫурпилӗк сухаласан тепӗр хут тупта-малла пулат, ҫавӑнпа тата...

Ҫакӑн пек халапсем кӑна илтӗнеҫҫӗ. Йӑрар тӑвӗ ҫинҫен пӗрпӗрин хушшинҫе.

— Пӗр ҫулне тӑм катӑкӗсене пухса ҫӳрерӗ пӗрскер, хӑш ҫул пулҫӗха вӑл?

— Хӑш ҫул... Епӗ аманса килнӗ ҫул пулас пулат теха вӑл, 1919-мӗш ҫулта пуҫ...

— Е-е... Ҫӑнах ҫав ҫулҫке вӑл. Ҫак кӗсре ула тыхана тунӑ ҫулне теха вӑл. Ҫавӑнтан астӑва-тӑп: питӗ йуратаҫҫӗ вӑл вырӑс ула тыхана. Е-е, шӑпах ултӑ ҫул пулас ӗнтӗ вӑл.

— Ҫапла ҫав, ултӑ. Пирӗн Хӗветӗр те пилӗк ҫулта таха хаҫ. Вӑл епӗ тавӑрӑнсассӑн ҫулта-лӑкран ҫуралнӑ та. Ҫаплах ҫав... Шӑпах ултӑ ҫав...

— Çавăн ђухне ара вăрттăн килсе пуçтаратпăр çак тăм катăкĕсене. Никама систерместпĕр. Е-е-е, вĕтĕннĕсем. Вăрттăн пуйатпăр пулаť ĕнтĕ. Ĕçлесе çитсе пыманнине—йантăпа пурăнасшăн тата...

— Ман хаљ те выртаççĕха пĕр тăват пилĕк катăк кĕлет алăк тăрринђе.

— Епĕ тасатрăм çавăн ђухнех...

Çĕртме пĕрле тăвакансем аса илсе пуплеççĕ иртнĕ çулхисем çинђен. Пысăкрах ђул катăкĕсене тапа-тапа сирсе хăвараççĕ умĕнђен. Вĕтĕреххисем çине çавăрăнса та пăхмаççĕ. Сухалаççĕ.

— Вăрçă тухнă çулне çакăн пек йĕпе тăрсађђĕ çанталăк. Вырнă тырăпул çĕрсе кайрĕ ун ђухне те. Нурăса кайса килиђђен ывăнађђĕç лашасем.

— Кĕркурисене Йĕпреçе леçрĕмĕр те епĕр. Виçĕ кунта аран кайса килтĕмĕр. Шепекеђе çитсен ывăнђĕç лашасем. Туртса кăларайммаççĕ урапана. Калама çук пылђăк.

— Тырри лайăх пулнăђђĕ çав вăл çулне.

— Тырри кăçал та аптăрамаллах мартаха вăл.. Вырма срукне памасçке çанталăкĕ.

Кунĕн-çĕрĕн çăваť ăш çумăр. Тухма-кĕме çук пылђăк. Хĕвелĕ хĕртет, пĕçертет. Çăмăрĕ те çавăнтах пĕрĕхет.

— Панинђен тарма çук. Анђах... алла пулсан пырăђђĕ. Каплах пулсан, алла илеймĕпĕр. Уйах

та хăвармалла пулĕ,—пуплеççĕ çăмăр вĕçĕмсĕр çунишĕн. Кулђанаççĕ тырăсем уйах йуласран.

— Пĕлтĕр ку вăхăтра ыраш пĕтернĕђђĕ. Кăçал çурла та кĕмен. Кайа йултăмăр. Çиме пĕтнисене кансĕртерех. Çиме çитекенсемшĕн хăт аплах мар. Выçă пĕр кун пурăнасси те, ађам...

«Йăрар таврашĕнђи тăмсене пуçтаракан вырăссем килнĕ, тет. Çав, пĕр çулне килсе кайнă вырăсси хăй тăванĕсене пуçтарса килнĕ, тет те, хаљ пилĕкĕн тет, ађам. Пурăнмаллах килнĕ, тет. Ылтăн пурах вăл тăм ăшĕнђе. Ахаљтен аппаланса çӳрети çын. Вĕсем пĕлеççĕ пулĕçке... Пилĕкĕш те маттур тет. Хăрамастпăр хаљ, тесе мухтаннаççĕ, тет хăйсем» пуплеççĕ йал çинђе.

Ку сăмахсене илтнĕ хыççăн ђылайĕшĕ урам тăрăх çӳреме тухрĕç. Курасшăн çĕнĕрен килнĕ çынсене.

Икĕ касăм килсе çурĕ çăмăр пайан та. Урам хушши пылђăк та, шыв. Пĕђĕкçеççĕ сырма пуçĕнђе пăкăртатаť çăмăр шывĕ. Урапа йĕррисемпе васкаса ђупаť вăл унталла. Васка-васка çӳлтенех сикет шырлана. Пĕртте хăрамасť суранланасран. Ара, шăмăсăр йапала вĕт. Ванас çук. Ура-ал мăкăлтанас çук. Ерне, ђылайђђен кăпăк кăларса выртаť те айалта. Унтан мăкăртатаť хăй халлĕн. Каллех ђупаť малалла. Васкаť.

— Пилĕкĕн мар, тăваттăн анђах та... Тăват-

тăш те питĕ матурскерсем вара. Пирĕн ана пуҫĕнҫен шăйăрлан туса кайнă та, ҫавăнта ҫӳреҫҫĕ. Шăйăрланран вĕтĕ ҫулсене пухаҫҫĕ кăсем те. Мана ҫĕнсе илҫĕҫ те: «пирĕнпеле ĕҫлеме ҫӳреместни?» тесе ыйтрĕҫ. «Ҫӳресси ҫӳремелле те, тырсем пиҫсе ҫитнĕ вĕт. Тырă вырма кайас пулаŏ. Ак ку та ман. Вырас пулаŏ. Анҫах ҫанталăк кăна кансĕрлет» терĕм. «Сан ана-и ку» тесе тĕлĕнҫĕ пĕри. «Ман»—терĕм. «Телейлĕ ана» терĕ те, ман куҫ умĕнҫех пĕр ҫулне илсе ҫикрĕ сумккине,—халап ҫаптараŏ Мĕкĕте кӳршĕ ҫыннипе тырă вырнă ҫĕрте.

— Епĕр куракан ҫул мар пуљ ҫав вăл. Ăраснарах ҫул пуљ.—Ыйтса тĕпҫет кӳршĕ ҫынни.

— Ҫук, ара хам ана ҫинҫех пуҫтараҫҫĕ вĕт. Хамăр куракан ҫулах. Пĕрик катăк епĕ те илсе таврăнтăмха. Тен...

— Илтереҫҫи вара хăйсен куҫ умĕнҫех.

— Хăŏ лавĕпе тийе. Анҫах вăтантараŏ ҫав вĕсен куҫ умĕнҫех. Ҫавăнпа...

Вĕтĕ ҫулсемпе кăвак тăм катăкĕсем ҫинҫен каллех сарăлҫĕ тĕрлĕрен йумах. Тĕрлĕрен пупleҫҫĕ вĕсен пуйанлăхĕ ҫинҫен. Пĕр сăмах ҫумне виҫҫĕ хушаҫҫĕ; виҫҫĕ ҫумне—тăххăр, тăххăр ҫумне...

— Пĕр катăк тăм ҫинҫе ҫĕр тенкĕлĕх тупнă, тет, аҫам, ылтăн...

— Вăл мĕн... Пĕр майăр пек ђул ăшĕнђех виçĕ çĕр тенкĕлĕх тупнă, тет. Пирĕн хамăрăн курнă ĕçленине...—тыр вырмаран каçхине апат тума тавăрăнакан хĕрарăмсем пуплеççĕ пĕрпĕрне ăмăртса.

Йăрар тăвайккисене сăнакан вырăссем килнĕ хыççăн хăш-пĕр çемйере аслатисем те авăтма пуçларĕç вăраххăн. Хир кушакĕсем ирте ирте кайаççĕ арпа арăм хушшинђен.

— Çынсем арăмсем пур—хăйсем пуçтарса çӳрерĕç ун ђухне. Сан пур—пуçтарса килнине те кăлара-кăлара тăкнă. Ăçтан пурăнăç тăван ун пек арăмпа?—хăтăрать упăшки арăмне пĕр çулнехи тăм катăкĕсемшĕн.

— Ху малтан кăларса тăкнă епĕ саппанпа пухса килнĕ ђулсене. Сурăх путекки кĕтӳрен йулнă тесе çынсене суйса пуçтарса çӳрерĕм. Ахалех харама кайрĕ. Вăл... пурăнма пĕлмен арçынпа!.. Парăнмасть упăшкинђен арăмĕ.

Çĕнĕрен килнĕ вырăссем хĕрсех тытăнђĕç ĕçлеме. Кунĕн-çĕрĕн ђаваланаççĕ Йăрар тăвĕнђе. Çитменнине тата хăйсемех те, йалсенђен çынсем илсе тухса тара тытса та ĕçлеттереççĕ. Шăтăксем ђавтараççĕ, тăмсем, ђулсем кăлараççĕ. Кашни тĕслĕ тăмĕсене хут çине ӳкерсе çырса пыраççĕ.

Шăтăксем ђавакансем патне хăшĕпĕрисем тырă вырма пăрахсах курма пыра-пыра тăраççĕ. Вĕсем мĕнле ĕçленине сăнаççĕ.

— Шутсăр пуйаççĕ пуљ ку вырăссем...

— Мĕншĕн апла шухăшлатăн?—ђăвашлах ыйтрĕ вырăссенђен пĕри тĕлĕнсе.

— Ара... есĕ ђăвашим?—пĕр харăс сăмах хушрĕç курма пынă çынсенђен пĕриккĕн-виççĕн.

— Ђăваш епĕ. Мускаври Универçитетра вĕренетĕп. Хаљ епĕ стутент. Килте тырă вырса епĕ кăçал та.

— Суйатăн пуљ?—ђăтаймарĕ итлесе тăракансенђен пĕри.

— Ара... мĕн суймалли пур...

— Мĕн йатлă ес, ывăлăм?—куçĕсене йĕпе кĕпе çаннипе шăлса ыйтрĕ кăтра пуç Хĕлип.

— Илларионов, теççĕ мана,—татса каларĕ стутент.

— Ыттисем камсем тата? Санăн пиђђусем мар пуљ?

— Çук. Пиђђесем мар. Пĕри, ак ку—Корнăй иншенер Сопăлĕв; вăн, шĕлепкепе тăраканĕ—Хусанти Универçитетри профессăр Ђертынтсĕв; ак ку, хам çумри—Хусанти стутент Суур.

— Мĕнле, мĕнле, мĕнле: Сурăм?—хăлхине хăрах йенелле туса ыйтрĕ тепĕр хут клуххуй Унтри.

— Суур.

— Аха, Сур. Ђăваш хушаматлă тата...

— Пирĕн йала куçармалла теççĕ, ђăнахахши?— ђăтаймасăр ыйтрĕ кăтра пуç Хĕлип.

— Çук. Епĕр шыракан йапаласем айалта вĕт. Епĕр çĕр ђаваласа айала кĕретпĕр вĕт. Йал пире нимĕн те канçĕрлемест. Çывăхра йал пурри пирĕншĕн темĕн ђухлĕ те лайăх. Акă, кăçал мар, килес çул кунта вăйлă ĕç пуçланаŤ. Кунта питĕ те нумай тупăнаŤ фосфорит. Рапођђисем питĕ нумай кирлĕ пулаççĕ. Рапођђисем валли пурăнмалли çуртсем сасартăк тăвайас çук. Сирĕн йал çывăхраххи калама çук ырă пулаŤ рапођђисемшĕн.

— Рапођђисемшĕн ырă пулаŤ теха вăл. Рапођђисем пирĕншĕн—те ырă пулĕç вăт?..

— Рапођђисем камсем пулаççĕ тата... Рапођђи вăл—есех вĕт. Санăн арăму та, хĕрў та, ывăлу та, кинў те, ху та рапођђи. Мĕн хăрамалли пур рапођђисенђен...

Ку сăмахсем вирлĕн перĕнђĕç курма пынă çынсене. Тахçантанпа ăшра темĕн тĕрлĕ шухăш авкаланса çўрени нимĕн йулмиђђен сăрхăнђĕ çак самантра.

— Итлеха, Хĕлип Ваççилђă, рапођђи пулатпăр вĕт. Ара пире темĕн каласа хăратса пурăнаççĕ йал Йаккăвĕсем. Итле вара вĕсен йумахне... Такки пăтратаç вĕт пĕтĕм халăха. Мĕн ђухлĕ

тĕртĕрен хыпар кăлармарĕç пуљ ку ĕç çинђен. Ара.. такçанах килсе ыйтмаллађђĕç. Хваттеррĕсене кайма вăтанатпăр. Кунта килме хăратпăр. Мĕн хăрамалли пур ара. Сывă пулăр!—Илларионов студента тавтуса саланђĕç кашни харпăрхăй анисем çине курма пынисем.

— Вырăссисем мĕн тĕслĕ тăмĕсене хăйсене илнисене асăрхарăни?—кĕтсе ыйтрĕ арăмĕ кăтрапуç Хĕлипрен. Ађисем те вырма ђарăнђĕç.

— Ухмах. Ылтăн шырамаççĕ вĕт вĕсем. Темĕскерле фосфорит ђулĕ шыратпăр, тет. Вăл пире нимĕн тума та кирлĕ мар.

— Тата ма ђаваласах шыраса çӳреççĕ?

— Ара, тупасшăн ђаваласçĕ. Кайран хапрăк пулаĭ вара кунта. Пире илетпĕр тет ĕçлеме. Пĕри ђăвашах. Ђăвашла ăнлантарђĕ. Питĕ лайăх калаçаĭ. Тĕппипе ăнлантарђĕ. Ахалех темĕн те пĕр туртса кăлараççĕ Йал Йаккăвĕсем.

— Апла еппин?..

— Çапла çав...

Фосфорит шăтăкĕсене ђаваласа çӳренĕ уйвырман тырă уйĕ. Çавăнпа та фосфорит шăтăкĕсене вырнă анасем çинђе кăна ђаваласа çӳреççĕ «вырăссем». Питĕ те кăмăллă çынсем. Çитменнине тата хисеплеççĕ ђăвашсене. Вĕсен тыррисене таптаса тăпра купаласа çĕмĕрмеççĕ. Çакă пушшех тĕлĕнтерет йалти çынсене.

— Темĕн ҫухлĕ паха йапаласем шыраҫҫĕ хăйсем. Ҫавах та тата тырăсене ҫĕмĕрмеҫҫĕ, хĕрхенеҫҫĕ.

— Хăйсем те тырпул акса тăваканскерсемех терĕҫ. Ара... пĕлмеҫҫи хресҫен нуштине...

— Тепри пулсан, пăхĕ санăн тырруна...

Ҫанталăк йаланах пĕлĕтлĕ, салхуллă. Хутраситре ҫеҫ курăнаť сарă хĕвел. Парăнтараймасť вăл та таҫка пĕлĕте. Таҫка, хура пĕлĕт ăмăртаť хĕвелпе. Вăраххăн та патмаррăн хупăрлаť ун сăнне. Насоспах пĕрĕхет шывпала ҫĕр ҫине. Тӳрем ҫĕр те ҫутăхаť шывпала. Лупашкасем туллийех унпала. Пусма ҫук ниҫта тип вырăн. Ларса канма ҫук вырăн: пылҫăк, йĕпе.

Купаланă кĕлтесем симĕсленҫĕҫ. Сип-симĕс лараҫҫĕ ҫĕмелсем. Уйри тырăсем тĕссĕрленҫĕҫ. Хуп хура курăнаҫҫĕ хăмăлĕсем.

— Манăн виҫĕ ҫĕмел пĕтрĕ ҫăмăрпа.

— Манăн та шăтнă пулмалла. Кайса курман.

— Шăйăрлатни ҫурпилĕк ҫинҫен икĕ ҫĕмел йухтарнă манăнне ĕнерхи ҫăмăр.

— Ĕнер фосфорит ҫакалакансем патне аран ҫитсе тăтăм. Хам пĕр ҫĕтĕк сăхманпа кăна. Вилес пулаťҫĕ унта ҫитеймен пулсан. Ҫатăр айне тăратрĕҫ ҫав вăйлă ҫăмăр ҫунă вăхăтра.

— Шыв тулҫĕ пуҫ вĕсен шăтăкне.

— Урлах карларĕ. Йатлаҫаҫҫĕ Михалккисем.

Урӑх ђавмастпӑр, теҫҫӗ. Вилес пулаҭ ку ӗҫпе, теҫҫӗ.

Йӑлтах йӑлӑхтарђӗ вӗҫӗмсӗр ҫӑмӑр. Савӑнмасҭ текех унпа никам та. Анђах ђарӑнмасҭ вӑл, канмасҭ пӗр кун та.

Ирхине уйарах. Илемлӗ ҫанталӑк. Хӗвелӗ те ухаҭ мухтансах. Хӑйӗн йапшар аллисемпе ађаш-лаҭ ҫӗр питне. Кулаҭ, йӑпатаҭ, савӑнаҭ тӗнђепе. Анђах нумайлӑха мар. Ҫухалаҭ ҫавӑнтах.

— Кашни кун мур йӑттисем пек пулатпӑр.

— Ӗҫлеместпӗр урӑх.

— Урасем ыратакан пулђӗҫ пӗрмайах шыв ҫинђе.

Ӗҫлекенсем тухмаҫҫӗ ҫӗр ђавма. Ђӑнахах ывӑнђӗҫ пылђӑкпа.

Йӑрар тӑвайкки—шывлӑ ҫӗр. Ҫӑмӑрпа пушшех йепрет шывланса. Канҫӗр. Хурлӑх ӗҫлеме.

— Ай, та, рас ешшо.

— Ай, та, рас ешшо.

— Ай, та, рас...

Ђавнӑ шӑтӑкран шыва тӑкаҫҫӗ витрепе. Ан-ђах шывӗ тулсах пыраҭ хӗррипе.

— О, ҫилней.

— О-о, ҫилней!

Хӑвӑртран хӑвӑрт ҫапаҫҫӗ ҫӳлелле. Хӑшӗсем ӗҫлеҫҫӗ ҫилленсех.

— Хӑйамата укҫу-кађку.

— Кирлĕ мар.

— Айтăр кайатпăр.

Шывăн хăватне тӳсеймесĕр уттараççĕ килелле. Ĕçĕ сан пултăр хăт йепле.

— Тархасшăн ан кайăр. Укçа хăпартатпăр. Икĕ хак паратпăр,—тархаслаççĕ ĕçлекенсене фосфорит хуçисем.

— Хăйамата сирĕн укçу-тенкӳ. Укçа тесе — вилес мар. Халђ те урасем шыçăнса кайрĕç.

Ђарса ђарма çук. Саланђĕç рапођђисем. Пăхса кăна тăр ĕнтĕ халђ. Кунсем иртеççĕ пĕр ахалђ.

Тăваттăн тăвата йала саланаççĕ ĕç вăй шырама. Çăмăрĕ вĕçĕмсĕр ислетет, ђарăнмасť. Хăватлă хĕвел те ăна ђараймасť. Ђарма мар, хăй те вăл парăннă çăмăра.

Йăрар çырми карлаť çăмăр шывĕпе. Улăхĕ выртаť çапçутă. Симĕс курăк курăнмасť улăхра. Йапшар хĕрсен тĕкĕрĕ пек выртаť çутăхса. Анђах, пыма хăрушă, çăтаť çăтмаллах.

— Ĕнер çумарĕ. Пайан та уйар. Паромĕттăр уйар кăтартаť. Пирĕн ĕççем ăнаççĕ ĕнтĕ...—халапласçĕ пĕрпĕринпе фосфорит шыракансем.

Çăмăр çумарĕ ĕнер. Çумасť пайан та. Хĕвел хăй хăватне йаđĕ Йăрара. Шывсем вăрахăнах тараççĕ çырмана. Йăрар улăхĕ те улаланђĕ: кунта çаран, унта шыв. Вылђамасť вăл текех хумханса, çутăхса.

Симĕс пуçлă кĕлтесем саланђĕç çĕр çине. Кĕлтенĕн-кĕлтенĕн выртаççĕ хушкăнса. Ула ђăла анасем çурмаланђĕç. Çурмаланђĕç уйра кĕлтесем.

Фосфорит шăтăкĕсем çав çавах пылђăк. Калама çук кансĕр ĕçлеме. Насос та çăтаймасť вĕсен йăлмине. Витре те виçеймест тăмлă нимĕре.

— Ĕçлеместпĕр.

— Май килмест.

— Тырă вырма кайатпăр.

— Çанталăк уçă. Кунта пăђă. Çăрăл йăлмапала.

Саланђĕç çĕнĕрен пухнă рапођђисем те. Йулмарĕ ĕçлекен никам та.

Ирĕксĕрех пăрахмалла пулђĕ ĕçлеме. Каймарĕç йалсем тăрăх текех çӳреме. Çӳресен те усси çук. Çын тупăнмасť. Тырă выраççĕ.

Гĕнђе пуçлăхĕ йăлкăшаť, выљаť. Йапшарăн хыпашлаť çĕрĕн кăкăрне. Çĕрĕ те уççăн ăна хирĕç сывлаť. Кăкăрĕпе кармашаť ун йенне.

— Хамăрăнах ĕçлемелле. Унсăрăн май тухмĕ, терĕ тăваттăшĕнђен пĕри.

— Ман кăкăр ыратаť. Епĕ ĕçлейес çук. Епĕ кунта та аран тăратăп,—аран сăмах хушрĕ, пĕтĕм ђирлесе çитнĕ тепĕр йулташĕ.

— Пăрахса каймалла пулаť.

— Пăрахас марђђĕ.

— Пирĕн ку Йăрар тăвайккине пăрахмалла. Ку питĕ те шывлă вырăн. Тавай Ишек тăвайккине куçăпăр. Унта кунти пекех шывлă мар. Пăралама тытăнăпăр. Вăл ĕçе хамăр та тума пултаратпăр,—хăйĕн вирлĕ сăмахĕсене каларĕ отрет пуçлăхĕ Сопĕлĕв профессăр.

Ђăн малтан хăй пыђĕ пăра çывăхне. Унтан йулмарĕç йулташсем. Ĕç пуçланђĕ.

Фосфорит отређĕ çинђен çĕнĕрен тĕрлĕрен йумахсем сарăлма тытăнђĕç. Кам йепле суйма пĕлет—çавăн пек ӳркенмест.

— Михалккасем ђавса иншенерсемпе укçа нумай тупнă, тет те... Хаљ, вăн, ĕçлеме те пăрахрĕç,—пуçласа йађĕ Йал Йаккăвĕ Нурăсран тавăрăннă ђух çул çинђе кӳршĕ йал сыннине.

— Темле укçа вара?—ыйтрĕ кӳршĕ йал çынни.

— Ара, çав, иншенерсемпе çĕр ђакаланă çĕрте ылтăн купи тупнă, тет те... Çурмалла тунă, тет вара.

Кӳршĕ йал çынни—кӳршĕ йал çыннине... Каллех кӳршĕ йал çыннине... тата... Каллех.

«Тĕмпек хыçĕнђе ылтăн тăпри кăлараççĕ тет. Анђах иншенерсем ĕçлеме никама та илеймеççĕ. Хăйсемех ĕçлеççĕ тет» сăмах сарăлђĕ таврари йалсене.

Ђăтаймарĕ Çĕрпел Макçăм та, аллине туйа тытрĕ те, утрĕ Тĕмпек йеннелле.

— Ĕне çухалнӑ та манӑн, сирĕн йалта йут ĕне-мĕн курӑнмасҫи?—ыйтрĕ Максӑм Тĕмпекре пĕр çамрӑк арӑмран.

— Мĕн тĕслĕ?

— Хура-хӑмӑр...

Арӑм ун тĕслĕ ĕне курнине каламарĕ. Максӑм, йӑвӑррӑн сывласа куҫҫаннӑ пек пулҫĕ те, утрĕ малалла. Çавӑнтах илҫĕ ĕнене мухтаса.

— Ĕни лайӑхҫĕ. Шалккӑ вĕт...

— Çапла пуҫ ара... Кирек йепле пулсан та... арӑм та хĕрхенсе уйӑрӑлҫĕ Максӑмран.

«Максӑм Тĕмпек хыçĕнҫи тӑвайккинҫен ылтӑн ҫӑмӑрки тупнӑ тет» пĕри те пĕри пуплеççĕ Çĕрпел хушшинҫе. Ҫылайĕшĕ хатĕрленҫĕç Тĕмпек хыçне кайса килме. Анҫах ĕç вӑхӑҫĕ. Тырӑ вырмалла. Кĕлте кӳмелле. Çитменнине тата урӑх хыпар çӳреме пуçларĕ йал хушшинҫе: «нимĕнле ылтӑн та çук, кӑвак тӑм татӑкĕсем кӑна тухаççĕ тет çĕр айĕнҫен». «Халӑх темĕн те туртса кӑларĕ. Мĕн ылтӑнĕ пултӑр Йӑрар çырминҫе»,—терĕç те, каймарĕç хатĕрленнисем.

Хĕвел çине тӑрса хĕртме тытӑнҫĕ. Çӑмӑр пĕлĕҫĕсене вӑл пĕтĕмпех ум пӳлҫĕ. Парӑнтараймаççĕ хĕвеле пĕлĕтсем. Вӑрман хыçĕнҫен мӑкӑрланса тухаççĕ те—парӑнаççĕ хĕвелĕ. Татӑкӑн татӑкӑн саланаççĕ пур çĕре.

Фосфорит ĕçне никам та хутшӑнмасҫ. Çавӑн-

па ĕçĕ те малаллах кайаймасҭ. Çанталăк йĕпе ђух кансĕрђђĕ ĕçлеме. Йĕпе, сивĕ. Пылђăк, лапăркка. Вăрçађђĕç ĕçлекенсем. Хаљ типĕ. Тавра куштăрка. Анђах, ĕçлекен çук шăтăкра. Пурте уй ĕçĕнђе. Ĕç-хĕл аллинђе.

— Ма тепре çăмăр тытăнмасҭ? Çăмăр çунă пулсан луђшĕ килекен пулĕђђĕ. Каплах ĕçлеме май килмест,—терĕ Сопăлĕв иншенер пăра аври çине ларса.

— Манăн алăсем йулмарĕç ĕнтĕ,—унăн сăмахĕ çумне хутшăнђĕ Илларионов.

— «Мана пурĕ пĕр. Манăн алăсем ыратмаççĕха»—вăрттăн ђийеллĕн пăхса илђĕ йулташсем çине Суур, хăйĕн умĕнђе выртакан сарлака хут çине кăвак кăранташпа пăнђă лартса. Хаљ шăтаракан шăтăка паллă турĕ ĕнтĕ вăл план çине.

— Та, икĕ ерне йахăн ĕçлетпĕр... Штутсĕр ултă çул кайарах ĕçленĕ ђухлĕ ĕçлейменха епĕр. Ĕçе вăйлатмаллах. Нук-кă, Иван, çавăнталла уттарарха,—хăйсем ларакан вырăнти кăнтăрланалла кăтартрĕ Ђертынтсĕв, хăйсемпе пĕрле ĕçлекен нĕртен пĕр рапођђийе.

— Ох, çав пĕлĕтсенђен вăйлă çăмăр пуçланса кайсан... Хаљ ĕнтĕ тырă та вырса пĕтереççĕ. Хресђенсене те кирлĕ çăмăр. Ыраш акнă. Çăмăрсăр май килмест. Пире пула пушшех те ырă...—

Хапăс хыçĕнђен хура, тађка пĕлĕтсем тухнине кура карăнса, анасласа илђĕ кахаллăн Сопăлĕв.

— Шăмшак питĕ те йăвăр... Çăвасси... çăваватех пулĕ теха,—ўркенсе çирĕплетрĕ Сопăлĕв халапне Суур.

Хапăс хыçĕнђен хура, тађка пĕлĕт вăрахăн улăхаŧ Йăрар йенелле. Тĕрлĕрен илемлĕ, хăрушлă курăнаççĕ пĕлĕт хĕррисем. Çавăнтах пĕринђен татăлса теприн çумне çыпăçаççĕ. Аслати авăтаŧ вĕçĕмсĕр. Хăрушăн кашлани илтĕнет пĕлĕтрен.

— Вăйлă çăмăр пулаŧ ку,—çўçенерех сăмах хушрĕ Илларионăв хăй йулташĕсене.

— Туртасене йал йенне çавăрмалла пулђ...— пуплесе илђĕç харпăрхăй хушшинђе.

Салхуллă тăраŧ çанталăк. Кĕр сăнĕ çапнă ăна пĕтĕмпех.

Хĕвел сахал курăнаŧ куç умне. Ун çутти çĕнеймест кĕр кунне. Кив пўрт кантăкĕнђен йапшар хĕр пăхнă пек пăхаŧ кĕрхи пĕлĕт айĕпе. Çавăнтах вăтанса пытанаŧ ун хыçне. Илемлĕ пек кулаŧ куллине. Анђах çавăнтах пăђăртаŧ тутине.

Уй илемĕ çухалђĕ, туртмасŧ хăй йенне. Хăмăлсем кăна лараççĕ хурланса. Кĕрхи çиле темĕн калаççĕ пĕр сасăсăр. Лешĕ илтмест, туллаŧ сарăмсăр. Ырă кăмăлпа пуплесшĕн хатĕрленнĕ хăмăлсем, ђĕтренсе кăна йулаççĕ сивĕ çил хыçĕнђен.

Ç̆ухе, хура пӗлӗтсем йухаççӗ пуç çинҫе. Пӗринҫен пӗри иртеççӗ ӑмӑртса. Кашнийех пӗрӗхет çӗр çине. Тупма çук вӗсен виçине. Пӗри куркапа, тепри алтӑрпа, виççӗмӗш витрепе...

Ӑш сӑра ӗçнӗ пек пулҫӗ ырхан çӗр. Кӑкӑрӗсем хӑпарнӑ çӳлелле. Кӑпӑк йухтарат̆ çӑварӗнҫен. Тирпейрен тухнӑ—выртат̆ йӗп-йӗпе.

— Ӗçлекенсем кирлӗ мари сире?

— Епӗр ыран Паҙукпа пырас, тетпӗр!

— Хамӑр йалтан виççӗн пулатпӑр епӗр!

Сӗне пуçларӗç вӑйхалне кӳршӗри çамрӑксем. Икшерӗн-виçшерӗн тархаслаççӗ отрета.

Отрет хӗпӗртесе йышӑнат̆ вӗсене.

Ӗç пуçланҫӗ. Йӑрар тӑвайкки витӗнҫӗ халӑхпа. Унта кунта çын пуххи. Вӗсен умӗнҫе çӗр купи. Аркатаççӗ кӑна Йӑрара.

Инçерен, катаран илтӗнет ӗç йурри. Уççӑн та вирлӗн çурат̆ сывлӑша:

«Тавай ӗçлер,
Вӗçне вӗçлер,
Йерипе,
Майӗпе...

Йурӑ пуçлаканӗ хыççӑн харӑссӑн йантратаççӗ.

О, о, майӗпе,
Майӗпе, майӗпе
Ой, та, рас ешшо,
Ой, та, рас.
Ой, та, рас ешшо,
Ой, та, рас...

Шăтăкран сăнђăрпа хăпартаççĕ витресем. Туллийех пылђăк, тăмлă шыв. Çавăнтах курăнаť кăвақлă, хураллă, шурă ђул. Çавăншăн ђалаççĕ ĕнтĕ шăтăксем. Çавăншăн çураť те сывлăша ĕç йурри. Çакă ĕнтĕ пулаť фосфорит.

* * *

— Йăрарпа Ишек тăвĕсенђе фосфорит хисепсĕр нумай. Епĕр çавăрса илнĕ районтах, çултаłăкне пилĕк çĕр пин пăт кăларсан та, пирĕн шутпа, вăтăр пилĕк çул ĕçлеме çитет. Кунта промышлĕннăй район пулаť. Фосфорит савăтне лартатпăр çакăнтах. Есĕр—пулас рапођђисем,—терĕ ĕç пĕтерне хыççăн, рапођђисен пуххинђе, отрет пуçлăхĕ—Сопăлĕв иншенер.

— Ур-р-р-р-а!

Ик уйăх ĕçленĕ хыççăн, ĕçĕсене пĕтерђĕ отрет. Йăрар тăвайккине хăварђĕ тăлăха. Унта пĕр çын пуçĕ те курăнмасť. Ĕç йурри йантăрамасť сывлăшра. Çăхансем кăнна савăнаççĕ лупамлă пушă хирте. Тискерĕн курăнаççĕ тăпра куписем.

Отрет кайрĕ.

* * *

Ђылай улшăнусем пулђĕç ку хĕлте йалсенђе Йăрар тăвайкинђе фосфорит нумай тупăнни—вăрăм шухăша йаđĕ пурне те. Пур те шухăшлаççĕ ун çинђен.

Пĕр халăх пухăвĕ те ирмест фосфорит йађĕсĕр. Кам та пулин çитсе перĕнет ун çине.

— Та, такки выçă хăвараççĕ пире. Мĕн пур пек çĕре ђаваласа пĕтереççĕ. Акма çĕр хăвармаççĕ. Самана-и вăл?—ђĕлĕмне шаккаса пуçларĕ халапа хурал пӳртĕнђе утарман хуçи.

— Ăм-та-та, сан арман ваљљи салатсем пулмаççĕ ĕнтĕ Йăрарта,—мăшкăласа илђĕ утарман хуçине çулла ĕçлекенсенђен пĕри.

— Мĕн шăлна йĕрсе ларатăн, кĕлмĕç... Есĕ ĕçлесе ырă куратăп, тетним килес çул. Курăн вăт, рапођђисене Мускавран илсе килеççĕ,—кăшкăрса пăрахрĕ паçăрах утарман хуçипе каварлашнă Ваçли.

— Пӳрт-çуртсене туртса илсе пĕтерĕç вăт. Хамăра ваљљи вырăн хăвармĕç. Шăлна йĕрсе ларатăн тата. Курăпăрха акă.

— Есĕр çулла иншенерсемпе ĕçлесе çӳремен пулсан апла пулмасђĕ. Сирĕн пирки пулаť ĕнтĕ вăл. Унта ан ĕçлĕр тесе мĕн ђухлĕ тархасларăм çамрăксене. Çук, итлемерĕç. Вăт, курăпăрха малашне. Вĕсемшĕн тӳсмелле пулаť ĕнтĕ...—вăраххăн, питĕ те ђейен çавăрса хуђĕ сăмаха Теренти.

— Çулла ĕçлес тетпĕрха епĕр каллех,—итлесе ларсан-ларсан хирĕç тухрĕ хăйне хӳтĕлеме ĕçлекенсенђен паçăр сăмах хушнийех.

— Ан сӳпĕлтет. Йалтан хăваласа йамалла сире.

— Йала сутасшӑн пуранатӑр.

— Кам пур сирӗн пек...

— Шуйттан ӑратти есӗр.

Пӗр харӑс кӑшкӑрса тӑкрӗҫ йалти «ырҫынсем». Унтан шӑпӑртах пулҗӗҫ, җӗнмерӗҫ. Никам ҫине те пӑхмарӗҫ, усрӗҫ пуҫӗсене ҫӗрелле. Те вӑтаннӑ пек пулҗӗҫ, те хӑранӑ пек. Пӗлме хӗн. Пӗри ҫеҫ сурҗӗ урайне йерипен:

— Ҭфу-у-у-у. Самана-и ку. Йал ҫине йал тӑраҭ те... Ӑҫтан пурӑнма май килет...

— Йеванкӗли ҫинҗех ҫапла каланӑ вӗт.

— Унта ҫырни пурте тӗрӗс ӗнтӗ...

— Ара... Турӑ кӗнекинҗе суйа пулати.

— Тӗрлӗрен йӑвӑрлӑхсем килӗҫ, тенӗ...

— Ҫитсе перӗнтӗмӗр ӗнтӗ...

Пӗрин хыҫӗнҗен тепри тытӑнҗӗҫ кӑшлама. Сӑмах ҫумне сӑмах тупаҫҫӗ. Хыҫран вӗрентсе тӑнӑ пек ҫапаҫҫӗ сӑмаха. Ан перӗн. Ан та җӗн...

— Улшуҫ Теренти җухӑнсене лартаҭ, тесе ҫырмани йеванкӗлли ҫине?—мӑшкӑласа илҗӗ ҫав хушӑрах хуралҫӑ.

— Ан җӗн, җӗн ҫӗлӗк. Санран ыйтмаҫҫӗ,—хутшӑнҗӗ ут арман хуҫи.

— Мӗнле җӗлхене тытма пӗлместӗр. Сан пек салат авӑртнӑшӑн сакӑр кӗренке илекен кам пур? Кам авӑртнӑ ҫӗртех вӑрттӑн вӑрласа ҫӳрет?

— Санӑн та, Ваҫли пиҗҗе, җарӑнас пулаҭ.

Ёлёк старăстăра çӳренĕ ҫух пирĕн пуç ҫинҫе утса çӳренипе çитмест тата сана... Халҫ те таптасшăн. Кам ман атте пуçне çапса çурнăҫҫĕ? Есĕ мари, намăссăр. Кам йулашки пăрува сутрĕ пиренне? Есĕ мари, тăм сăмса... Халҫ те ёлёкхи пек хăтланма шутлатним?... Нет, шалиш! Хăтланаймăн. Аллу кёске,—персе хуҫĕ карма çăварсене çулла ёçлекенсенҫен пёри.

— Кам мана лашасăр тăратса хăварҫĕ?.. Çĕрпелсене кам мана ҫирĕ йернĕ лаша леçсе паҫĕ? Кам лаша вăррипе тытăнҫĕ? Теренти, есĕ мари? Е, санран ыйтатаăп! Е-е-е, ҫёнме те хăймастăни? Намăсăр. Вăрă. Сире хăвăра йалтан хăваламалла. Йала хăвăр майлă çавăрса пурăнатăр. Кам иртнĕ каç манпала ӳсёрпе килсе вăрçрĕ? Е-е-е-х. Çыртасҫĕ ҫёлхене шăл хушшине...—ҫылайҫҫен ҫёнмесёр ларнă хуралçă тёпипе хёртрĕ Терентейе. Тивмелле касрĕ. Ыраттарҫĕ. Нимĕн те ҫёнмерĕ Теренти.

Кун пек тавлашусем пёрре кăна мар, кашни пухурах пулаççĕ. Анҫах ҫухăнсем тухаççĕ çийеле.

Халăх пухăвёнҫе анҫах хирĕçмеççĕ. Ытти вырăнсенҫе те пулкалаӗ тавлашу.

— Сана курка памасан та пырĕ. Алламĕн...—терĕ ăшсăрара утарман хуçи хуралçа ҫерет сиктерсе.

— Сан сăру, сăра мар вĕт. Сан сăру—халăх тарĕ. Епĕ халăх тарне ĕçместĕп. Епĕ ăна ĕçме килмен. Епĕ хам ĕçлесе тупнă укçана илме килнĕ сан пата. Тавай хурал укçи!—пĕр хăрамасăр тавăрҫĕ хуралçă.

— Епĕ сана хам килтех!—вăшт кăна иртрĕ хуралçă пуç тăрĕнҫен вутсыппи. Анҫах тивмерĕ.

«...Пирĕн çине куçа кĕретех тапăнни пулаť. Епĕр сут умĕнҫе хытă айăплама ыйтатпăр» терĕ ҫухăнсен пуххи хăйĕн постановленинҫе утарман хуçи çинҫен.

«...Ĕмĕртенпе халăх йунĕпе пуйнă. Халăх ĕнси çинҫе çўренĕ. Йал халăхне хаљ те хăй аллинҫе тытса усрасшăн. Вăл тĕрлĕрен киревсĕр, Совет влаçне хирĕç сăмахсем сарса çўрет. Сутăн çирĕп аллине хума ыйтатпăр ун çине», йанрарĕç хĕрарăмсен сассисем хăйсен пуххинҫе.

«... Классовый враг, просим сурового наказания»—çирĕпленҫĕ комсомол пуххин постановленийĕ.

— Лĕпĕртетсе çўрĕрех. Есĕр мана парăнтарсан—тĕнҫе тепĕр йенне çавăрăнĕ. Хĕвел ман сак айĕнҫен тухакан пулĕ. Сирĕн пек «ҫĕн пуçсем» ман маҫҫа тăррин҈е те пайтах,—мăшкăлаҫҫĕ утарман хуçи сута кайиҫҫен.

Сута кайнă кун, ирхине, утарман хуçи лайăх кĕл турĕ кĕтесри турăсене. Çурта та çутрĕ. Пуç-

çапрĕ вĕсене. Анђах, анђах, таварнаймарĕ сутран вĕсене тав тума. Кĕтрĕç-кĕтрĕç кĕтесри турăсем хăйсен хуçине,—кĕтсе илеймерĕç. Кĕтме те пăрахрĕç.

Хĕллехи çил ђакарђĕ хăватне. Пите кăшламасť вăл тарăхса. Çунађĕ ун вăйсăрланђĕ—шăхăрмасť. Урисем уксаклаççĕ—ташламасť.

Хĕвел йăпатсах кăтăклаť шур йура. Йăпатсах ыталаť ытампа. Пăђăртаť ăна йуратса. Йуратсах култараť. Хĕпĕртет, хурланаť шурă йур. Кулăпа йухтараť куççулне. Çитрĕ çуркунне.

— Епĕр тăваттăн, пĕрле ĕçлĕпĕр.

— Темиçен май килетха унта...

— Ђылайрах ĕçлемелле пулсан, Маринене те илетпĕр хамăрпах,—хĕрсем каварлашаççĕ шахтăра ĕçлеме. Ертел шыраççĕ хăйсемпе.

Кашни йалтах кĕтеççĕ шахтă уçасса. Кашнийех хавас ку ĕçе. Анђах суйлаççĕ пĕрпĕрне.

— Мана та, шăллăмпа иксĕмĕре, çырăрха,—терĕ ђухăнсем ертелешнĕ çĕре пырса арман хуçи ывăлĕ—Микулай.

— Пирĕн йыш хамăраннах çитет,—тавăрса пађĕ ертел органисатсилекен.

Кашни йалтах кĕтеççĕ шахтă уçасса. Кашнийех хавас ку ĕçе. Анђах суйлаççĕ пĕрпĕрне.

— Пире çырăр ĕнтĕ...—тархаслаť Микулай.

— Епĕр ертел тăватпăр вĕт.

— Пире те ертеле çырăр çав...

— Пултараймастпăр.—Ертелте пирĕн ђухăнсем кăна пулаççĕ.

— Епĕр пуйаним тата?..

— Сирĕн арман пур.

— Арман... Авăрмасť вăл хаљ пирĕн.

— Ĕнер кăна авăратђĕçке.

— Ĕнер çил пулнă. Авăрсан та çăнăхне кăлармасť вăл. Ђулсем çук унăн.

— Çавах арман хуçи. Хамăр та сирĕн армантах авăртнă епĕр. Лайăх тăваť. Тарçă тытатăр. Мелник пур.

— Ил еппин арману пулин. Чорт с ним!—çиленсе çитрĕ Микулай.

— Çук!—татăклă пĕр сăмах татса пађĕ ертел орканисатсилекен.

Пуйансем хăйсем тĕллĕн орканисатсиленме тытăнђĕç. Хутшăнмаççĕ вĕсем ертеле. Йышăнмаççĕ унта вĕсене. Килçуртсене йусаççĕ васкаса. Хăваттерсем тăваççĕ.

Мăн урампа пăралук кĕтессинђи пӳрт ђăсăлђĕ. Çĕнĕрен çыпăçрĕ тепĕр пӳрт. Хăваттер.

Йăрар тăвайкки тасалђĕ шур йуртан. Пăсланса кăна выртаť катаран. Хăйĕн кăкăрĕпе илĕртет йапшар хĕвеле.

Унта та-кунта кайăксен сасси—уççăн та вирлĕн çураť хăлхана.

— Атте, иншенерсем килнĕ, тет, хăваттер шыраççĕ,—урамран ҫупса кĕрсе йевитлерĕ ашшĕне урам кĕтессинҫи ҫĕнĕ пӳрт хуҫин кĕҫĕн ывăлĕ.

— Хăваттер. Хăваттер шыраŤ пулсан хамăр пата ҫĕнес. Ара ҫĕнĕ пӳрте вĕсем ваҙҙи тунă вĕт.

— Хапха умне ҫырса ҫапас, атте, мăн куккисенни пек пултăр. Вĕсем хапха умне ҫырса ҫапнă.

— Мĕнле ҫырмалла? Мĕн ҫине?

— Ҫиҫҫас, тупса кĕрем...—ту:са ҫупрĕ аҫа хăма пуҫ илме.

«Хываттир тайом» ҫырҫĕҫ ашшĕпе ывăлĕ хăма пуҫ ҫине хура кăмрăкпа. Тухса ҫакрĕҫ хапха умне—урама.

Йалсовет претҫетаттĕлĕ выҙăхсене шута илсе ҫӳрет килĕрен. «Хыватир тайом» тĕлне ҫитрĕ те «не» кĕртсе лартрĕ икĕ сăмах хушшине. Хăй утрĕ малалла.

— «Хываттир не тайом». Хăйсен икĕ пӳрт. Мĕншĕн пĕрне хваттере йамаççĕха. Ĕ-ĕ-ĕ, сăхă пуйан.—вăрçса иртрĕҫ шахтăна килнĕ ҫынсем, «Хываттир не тайом» умĕнҫен.

Ҫылайҫҫен ҫакăнса тăҫĕ кĕтесри кил хапхи умĕнҫе «Хываттир не тайом» хăма пуҫ. Кайрантан кайран тин улăштарҫĕ ăна хуҫи.

— Ма тĕрĕс ҫырмарăн? Ху виҫĕ ҫул ҫӳретĕн шкула. Сысна ҫури!—хăтăрҫĕ аҫине ашшĕ.

«Хватир тайоный» макра-макра çырса хуђĕ кĕтесри çуртăн ађи тепĕр хăма пуç çине. Ашшĕ хĕпĕртесе тухса çакрĕ хапха çумне—урама.

— Укçине парсах йаратăн пуљ, темиçе çўресси,—кантăксене сăрланă хыççăн ыйтрĕ Петĕркке.

— Ан сўпĕлтетха, уссине курман, пăскăлтаттарђĕ кантăк сăрлакана кĕтесри кил хуçи.

«Злая собака. Не входить» —хăма пуç тепĕр йенне симĕс сăрпала çырса хăварђĕ Петĕркке.

Хайар йăтăран хăраса кĕмерĕç ку киле никам та. Вăл йытăран хăрасах кўршисем те иртмесђĕç çав хапха умĕнђен. «Çынни путлĕ мар, луђшĕ патне пырас мар» тесе кăна иртеђђĕç йаланах катаран.

* * *

Капăрланђĕ Йăрар халăхпа. Тумланђĕ илемлĕ тумтирпе. Ĕç йурри шăранаť уйхирте. Çураť вăл уççăн сывлăша. Йарат те тарăн шухăша: «çăхан йăвиђђĕ çакăнта; халь, пăх та кур: кăткăлла ĕçлет халăх, шахтă пулса кайрĕ ĕнтĕ ку вырăн. Промышлĕннăй район пулаť, тесеђђĕ пĕлтĕр иншенерсенђен пĕри, ђăн пулђĕ».

Йăрар тăвайкки нимĕн хусканман. Сăнпиђĕ унăн витĕннĕ вĕтĕ ђулпа. Кăвак-хура тăм ыталанă ытампа. Ун айĕнђе, айалта, ĕç çарĕ. Айалта потвал. Айалта шахтă.

Кăвак, хура ҫул купаланаť ҫĕр шăтăкĕ умĕнҫе. Кунран кунах ӳсет ун купи. Ҫавăншăн кĕрлет шахтăра ĕҫ ҫарĕ. Ҫавăншăн ташлаť те ĕҫ ҫĕри.

Йăрарăн тымарĕ сарăлаť катана. Йут уйсенҫе те тупăннă фосфорит. Йут уйсем те танашаҫҫĕ Йăрарпа тăванла: фосфорит ҫулĕллĕ пуйанпа.

«Санаруй» тăвайкки алă параť катаран. Ҫиҫĕсакăр ҫухрăмран паллашаť Йăрарпа.

— Сывă-и, Йăрар тусăм?

— Сывă, сывă аҫам Санаруй. Мĕнле шăваҫҫĕ пурнăҫсем? Йантраҫҫĕ-и? санра хавaслă йурăсем? Йепле тупаҫҫĕ ĕҫхал ҫĕрисем? Курăнаҫҫĕ-и пурлăх куписем?—илĕртсе, йăпатса тĕпҫет Йăрар Санаруйĕнҫен.

— Санран кайа мар. Иртес шутăм пур,—паттăрăн тавăрҫĕ Санаруй мухтанса. Хăтăланнă пек пулҫĕ. Пуҫне ҫĕклерĕ йанах каҫăртса.

— Пултараймăн. Вăтăр пилĕк ҫул тапмалла ман ҫĕре етем сывлăшпе. Вăтăр пилĕк ҫул йантрĕ ман ҫире ĕҫ йурри. Ес, ăҫтан танашăн манпала, ҫăх ҫĕри... парăнман пек тавăрҫĕ Йăрар пуйанлăхне палăртса.

— Ех, Сĕрмеккей. Мĕн калаҫмалли пур санăн манпала. Алă-утмăл ҫул епĕ хăнкă та мар. Санран икĕ хут иртес шутăм пур. Ҫапла пуплеҫҫĕ ман ҫинҫен. Уншăн ан ҫиллен. Пурăнăпăр пĕрле...—кăмăллăн йăпатрĕ Санаруй.

— Пар алăна тепĕр хут. Ытала ман мăйран. Шухăш пĕр пултăр. Выљатăр ĕç вăййи пирĕн çинђе. Йанăратăр ĕç йурри пит инçе,—хавассăн ђăмăртарĕ Йарар Санаруйне хăй çумне.

Ишек тăвĕ те хутшăнђĕ çемйене. Вăрнарĕ те йулмарĕ вĕсенђен. Ыталанса пуçларĕç ĕç кĕвви. Ыталанса йан йађĕç ĕç йурри. Сывлăш уççăн савăнђĕ сасăпа. Пĕр ытам турĕ пурне пĕр çĕре. Уçă кăкăрне сарђĕ вăйăри хĕрсем пек.

Ђухăнсем ĕçлеççĕ шахтăра... Пуйансене леçмеççĕ патне те. Хутра-ситре кăна кĕреççĕ. «Ђухăнсен» шуђĕпе. Ђĕререн тарăхтарать ку йĕрке. Тума хатĕр вĕсем темĕн те.

«Санаруйĕнђи шахтă йăтăнса аннă, тет. 25 ç. вилнĕ, тет çĕр айне пулса. Питĕ хăрушă тет. Пирĕн йалсем кайма пăрахрĕç ĕнтĕ ĕçлеме»,— тыттарать пĕр йалсем тепĕр йалсене пасарта.

«Ха-а. 25 çын анђах еппин. 30 çын вилнĕ, тесе хыпар пурђĕ пирĕн йалта. Суйа пулнă еппин»—çирĕплетет малтанхи сăмахне кайранхи.

«Тата та нумайрах вилнĕ, теççĕ те... Ахаљ каламаççĕ, тет. Пайтах ђăваш пĕтеретпĕрха кунта. Çакăнта пĕтермесен, ăçта пĕтермелле вĕсене? Лайăхрах сăтăрмалла. Тепрере пĕр-икĕ çĕр харăс кĕртсе йарса сăптăрмаллаха, тесе пуплеççĕ тет иншенерсем. Ара, ман хамăн кумма ывăлех илтнĕ... Вăл суйакан çын мар. Хам ађана çавăн-

па йамарăм ĕнтĕ епĕ. Хăратаť ара»—пырса йерҫĕ малтанхи халапçăсем çумне каҫака сухаллă, вăрăм сăмсаллă, хĕрлĕ питлĕ-куçлă вырăс месçник.

«Епĕ те йамарăм ĕнтĕ. Укçа тесе пĕртен пĕр ывăлсăр тăрса йулас пуљ. Хăйамата укçу-тенкӳ. Халиҫҫен шахтă укçипе пурăнман. Пурăнкалăпăрха йерипен шахтăсăр та»—çирĕплетет хăй сăмахне малтан сăмах пуçланă халапçă.

— Есĕр, арман хуçисем, хăвăр ывăлăрсене йамасан та аптăрамăр. Сирĕн укçа ҫул айĕнҫех, Пирĕн акă ниçтан та пĕр пус тупма çук. Вилсен те ҫаваланас пулаť ĕнтĕ пирĕн. Унсăрăн пурăнма çук. Спаççипă шахтă уçăлҫĕха. Атту, выçă ларас пулаť...—кăмăлсăр пулса, куљљаннă пек пуплесе илҫĕ кĕтӳç Хĕветут, арман хуçисене пӳлсех.

— Сан ывăлна ахаљ те сута памалла тунă, терĕха. Киле пырсан шарламасти вăл? Смотрей, пĕр ывăлтан пĕр ывăлсăр тăрса йулăн вăт шахтă пиркийех,—сылтăм куçĕпе йулташĕсене хĕссе Хĕветута йумахларĕ Михалкка.

Пĕр вырăнта кăна илтĕнмесҫĕç кун пек йумахсем. «Тройккăпа» çавăрнаҫҫĕç йалсене.

— Сана сута памалла тунă, тет... Ара, есĕ, мĕн сăмах та шарламастăн ун çинҫен? Мĕншĕн лекмелле пулҫĕ ара, ывăлăм?—тархасласа

ыйтрĕ ывăлĕ каçхине киле таварăнсан кĕтӳçĕ Хĕветут.

— Хăçан?—тĕлĕнҫĕ, илтмен сăмаха илтсен, Хĕветут ывăлĕ.

— Ара, пайан илтрĕм епĕ.

— Камран?

— Михалкка каларĕ.

— Мĕнле Михалкка?

— Михалкка, арман хуçи.

— Ухмах. Хăйсен аҫине ĕçлеме илментен суйаççĕ вĕсем. Ан ĕнен вĕсене. Сута лекме мар, ырантан пуçласа старши рапоҫҫи пулатăп ĕнтĕ епĕ,—тăнлантарҫĕ ывăлĕ ашшĕне йĕркепе.

— Вилнисен хушшинҫе хамăр йалсем çук пуҫ те?..—ыйтрĕ сăмах майĕпе Хĕветут.

— Мĕнле вилнисем хушшинҫе?

— Ара, шахтă йăтăнса 25 çын вилнĕ тетçке.

— Кам калаĭ?

— Кăрлаппан Меçник каларĕ.

— Суйа,—урăх пĕр сăмах та ҫĕнмерĕ ашшĕне ывăлĕ...

«Санаруй шахтинҫе 25 рапоҫҫи вилнĕ» тенĕ хыпар ҫылай ҫуна шиклентерҫĕ. Шахтăна ĕçлеме кайма йатăрласа çăкăр пĕçернисем те ҫарăнҫĕç, хăрарĕç.

«Санаруй шахти йăлтах йăтăнса аннă. Халҫ унта ĕçлеме ҫараннă. Хупмалла тесе калаĭ унти

шахтăна»—тенĕ хыпар унта та, кунта та илтĕнет йалсенђе.

— Çынахван! Çахтăна кайатним, аçам? Аçăрханарах çӳре, аçам. Çан çинçен тĕлĕк путлех курман вара, аçам,—шурă куташкаллă, шахтăна ĕçлеме кайма тухнă Çынахвана курса ђарђĕ Пашалу Çтаппанĕ.

— Мĕнле тĕлĕк?—хыпаланса ыйтрĕ Çынахван.

— Ырă пулмасť сана, Çынахван аçам. Ан кай çахтăна, Çынахван. Алим Михаљи те суккăр пуља пуçларĕ çахтăрах,—ӳкĕтлеме тытăнђĕ Çтаппан.

— Мĕн калас тетĕн?—хыттăнах ыйтрĕ Çынахван.

— Ара, ан кай тетĕп çахтăна, аçам.

Урăх нимĕн те каламарĕ Çтаппан.

— Санăн сăмахна итлесен. Кĕр килне. Урам нĕрне йарса ларатăн, асаймăç,—пӳлсе хуђĕ Çтаппана Çынахван.

Ваттисен хушшинђе паллă йумăç—çĕнеймерĕ сăмахпа çамрăка. Çамрăк утрĕ шахтăна ĕçлеме.

Çынахван кăна мар кайаť шахтăна ĕçлеме. Унтан та, кунтан пыраççĕ çамрăксем. Шахтăшăн вĕреççĕ вĕсен йунĕсем. Сикеççĕ, тапаççĕ хастар ђĕресем. Çĕклеççĕ маттур алăсем мăлатук. Касаççĕ шĕвĕр каскăсем хулăм ђул. Выљаť йунтымар. Шĕветет вăл фосфорит купине.

— Ђăнк! Ђанк! Тук-тук!—илтĕнеççĕ сасăсем шахтăран тула катана.

— Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр!—килет вакунеткă тулалла. Пойăс пек йантраҭ ун сасси шахтăра. Вăрахăнах, тухнă май, ађашланаҭ-çемçелет.

— Шĕлтĕр-шĕлтĕр-шĕлтĕр-шĕлтĕр!—ађашшăн мухтанса кăтартаҭ хăй пуçне. Хĕрлĕ йалавпа ларнă пĕр çамрăк ун хыçне.

— Тут-тут-тут-ту-у ут!—сасă параҭ мăйрака. Систерет вăл вакунеткă тула тухнине. Кăђăк туртнă пек илĕртет хăй патне ĕçлеме.

Самантра çывхараççĕ маттур алăсем. Вакунеткă парăнаҭ вĕсене: «Епĕ сирĕн».

Чик, чик, чик;
вышел мальчик!
Ши, ши, ши;
Пулю в Чан-Кай-ши!
Раз, раз, раз!..
Айда, еще раз!..

Сывлăшпа пĕрлешет ĕç йурри. Сывлăша сиктерет, ташлатаҭ. Сывлăша ыталаҭ—ђуптăваҭ. Сывлăш канăçлăн карăнаҭ. Çиле май ĕç йурри катана саланаҭ.

Парнепе тухаҭ вакунеткă, силленет-ђĕтренет. Хăй çинђи пурлăха сылтăма тӳнтерет.

— Тут, тут, тут, ту-у-ут!—сасă параҭ мăйрака. Систерет вăл шахтăри çынсене. Илĕртет хăй

патне çывăха çывхарма. Каллех ун çине пурлăх тийеме.

— Шĕлтĕр-шĕлтĕр-шĕлтĕр-шĕлтĕр!—ташлаççĕ урасисем хускалса. Вакунеткă пытанать çĕр айне.

— Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр! — ђĕтретет шахтăна. Аслати аватнăн туйăнать катара. Çамрăк кăкăр кисренет унпала. Вăйлă ђĕрем тапать харсăрлатса. Вĕри йунăм вĕрет ĕç ыйтса.

— «Ĕç парăр мана! Ĕç! Епĕ рапођђи!—сатурланать кĕлеткем. Хул кăкĕсем тăвăнаççĕ йунпала. Тăпăртатать унта вăй купи. Ташлать ĕç ташши. Вăй пур манăн. Епĕ—рапођђи!»—

Ĕмĕрте тырă пулман тăвайкки. Усăсăр выртнă çулсерен карăнса. Кўтрем те, ђăнкă унăн «ку айкки». Тарăхтарнă пайтах утсем ыванса.

— Кĕлмĕç тăвайкки—çакă пулнă унăн йаđĕ тарăхнă çынсемшĕн йаланах. Халђ вăл—шахтă. фосфорит шахти. Ĕç хуранĕ. Пуйанлăх пиђки. Çак пиђкерен йухать ĕнтĕ «Ђăваш ылтăнĕ»—фосфорит.

Хĕртнĕçемĕн хĕртет сарă хĕвел. Мухтанать вăл тĕнђере вăйĕпе. Хăйĕн хăватлă аллипе тыткалать пурне те. Илемлĕ ђеђеке парăнтарать: çунатне шăрăхпа устарать, пуçне вăл хăйне тайтарать. «Пуççап мана, пуççап. Манра сан пурнăç, Есĕ ман алăра», мухтанать ђеђеке. Ирĕксĕрех парăнать лешĕ тĕнђе хуçине: «парăнтăм»,

Çав хушăрах кăтăклат̆ аллипе. Кăмăллăн ыталат̆ тĕнђене. Пăђăртат̆ хăй çумне йуратса.

Вăрахăн, уççăн перĕнет ђĕрĕ сывлăш. Пите вăл ађашлат̆ ђуптуса. Çемçеккей аллипе шăлăнат̆ ађашшăн. Унтан йурттарат̆ йуртăпа малалла.

Йака пуçлă ыраш пусси хумă-хумăн хумханат̆. Хăйĕн капăр тумĕпеле мăн кăмăллăн мухтанат̆. Шăрка пуçлă пуçĕсемпе туй арăмле йакатат̆. Унтан хыçран кăтăр касса комсомолккă пек пулат̆.

Кăтра пуçлă сĕлĕ пусси пĕртте вырăнтан хускалмаст̆. Хĕвел ăна йăпатсан та парăнмашкăн шутламаст̆. Ђăлтăр-ђăлтăр ђăлтăртатса кăтрисене вĕçтерет. Хура пусăран пăхса тăрса вăл та нимĕн сисĕнмест.

— Ђăвинк. Ђăвинк!—çава сасси улăх варĕнђе илтĕнет. Кĕмĕл тĕслĕ çутă çави лапаткана сĕртĕнет. Мамăк тӳшек—симĕс утă улăхĕпе ишĕлет. Уççăн-уççăн çил вĕрет те, хĕвел хĕртсе типĕтет.

Кăткă пекех шахтă ĕнеђе етем йышĕ вĕлкĕшет. Мăлатуксем ђулсем ватни тула уççăн илтĕнет. Шахтă кĕрлет. Ĕç вĕрет.

Тĕнђе куçĕ—сарă хĕвел пуç тӳпинђе вăй вылђат̆. Хĕрнĕçемĕн хĕрсе çитсе кăнтăр вăхăђ кăтартат̆.

— Таӊ-таӊ-таӊ-таӊ-таӊ-таӊ!—шахтă умĕнђи пĕђĕк ђан йантăрарĕ ђĕневлĕ. Писĕк куçлă, пĕ-

ҫӗкрех ҫын туртрӗ ӑна канраран. Куҫӗсенҫен шыв йухнине шӑлса илҫӗ ҫаннипе. Ҫурҫӗр йенне питне туса утасларӗ мӗлкине.

— Шӑп кӑнтӑрла. Пӗлет пулас кӗлетке. Еккей, хӑйамат. Ҫасси те кирлӗ марӗҫ мана. Иншенерсен ҫассипе пӗр вӑхӑт,—мӑкӑртатрӗ хӑйӗн сӑмси айӗнҫе.

— Ма ҫасрах ҫитертӗн кӑнтӑрлана, Михала?

— Вакунеткӑ пушах ларса йулҫӗ, шеремет!

— Ну, кантӑри ӗнтӗ вӑл та!

— Тапру, мӑй тымарӗсем пӗҫерекен пулнӑ пуҫ унӑн та. Канӑҫ пултӑр ӑна та!

Шахтӑран рапоҫҫисем тухаҫҫӗ шавласа. Савӑнӑҫлӑ тӗс. Пиҫӗсем кулаҫҫӗ пурин те. Куҫӗсем ташлаҫҫӗ вырӑнтах. Ларҫӗҫ апата.

Анҫах, савӑнмалли ҫук апатра. Кашни ҫийет хӑй тӗллӗн. Хӑшин тип ҫӑкӑр. Хӑшин ҫӑмарта. Ҫавӑнтах тепри кавӑлет шывпала.

— Ҫук, йулташсем. Капла май килмест. Выҫӑ вилме пулаҭ капла пурӑнсан. Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ хӑпармасҭ. Вӑн, Карӑппала Ҫынахван апата та лайӑх ҫийеҫҫӗ. Ӗҫре те вӗсем малта пыраҫҫӗ. Апат ҫимеллӗх пирӗн те пур ӗнтӗ. Пурӑнма пӗлместпӗр. Столовӑй уҫмалла пирӗн ҫакӑнта. Мӗн, хӑрӑнса пурӑнмалла?!—тип ҫӑкӑр ҫӑтса та анманнипе тарӑхса, сӑмах пуҫларӗ апатланакансенҫен пӗри.

— Çурт çук!—хирĕçленĕ пек пулђĕ унпа йунашар йулташĕ.

— Çулла мĕн çурђĕ кирлĕ? Хĕлле вађђи тăватпăр çуртне те.

— Тĕрĕс!

— Уçатпăр!

— Кам уçас, тет?

— Уçатпăр, снађђăт!

— Уçатпăр!

— Хаçатсем çуки пайанхи?

— Ĕнерхисем кăна!

— Тавай йурă йурлатпăр!

— Тавай!

«Каçмисене хываççĕ, каçакан çук!»—пуçласа йађĕ тенăрпа шĕвĕр сăмсаллă, сарă вăрăм ађа сассине хăма пăђăккилле ђĕтретсе вăрахăн.

«Ий-йай-йу! каçакан çук.

Атăр хамăр тытса та каçари!» йарса илђĕ пĕтĕм хор йулташăн сассине. Çинçенĕн, уççăн йантăрарĕ çырма тăрăх катана.

— Тыррисене выраççĕ, йурлакан çук,
Ий-йай-йу! йурлакан çук.
Атăр хамăр йурласа вырари.
Аслати те авăтать, çиçĕм çиçет.
Ий-йай-йу! çиçĕм çиçет.
Аслатин тур лашисем кĕçенеç.

Таврӑнас вӑхӑтра таврӑнмасан,
Ий-йай-йу! таврӑнмасан,
Пире атте-анне те ҫиленет.

Пӗҙӗкҫеҫҫӗ те пахҙа йешӗл сухан,
Ий-йай-йу! йешӗл сухан,
Илемлӗ иккен йешӗл те вӑхӑтра.

Ҫинҫейех те пӗвӗм, хура куҫӑм,
Ий-йай-йу! хура куҫӑм,
Илемлӗ иккен ҫамрӑк та вӑхӑтра».

Хӗвел питӗнҙен кӗлтепе пытаннӑ леш айккинҙе канакан хӗр те итлерӗ ку йурра. Кӑнтӑрла канма пӑрахсах йурласа илҙӗ тепӗр хут ӑшӗнҙе. Питӗ те илемлӗн туйӑнҙӗ ку йурӑ.

Амӑшӗ кӑкӑрне ӗмекен аҙа та ҫӑварӗнҙен амӑш кӑкӑрне кӑларса: «йа-йу!» тесе илҙӗ вӑрахӑн. Ҙӑтаймарӗ ку йурра. Унтан—хӑш! хуйхӑрнӑ пек сывласа ытакларӗ амӑш кӑкӑрне. Ӗӗ-ӗ-ӗ-ӗ» йурланӑ пек турӗ ӗмнӗ вӑхӑтрах. Ҙылайҙҙен итлерӗ тепӗр хут ӗмме ҙаранса. Ҫырмаран илтӗнекен илемлӗ йурра шырарӗ куҫӗпе. Ҙӑр-р—пӑхрӗ амӑш куҫӗнҙен. «Ӑҫта вӑл, анне?»—ыйтрӗ куҫӗпе. «Ҭа-ҭа-ҭа!»—ҫапрӗ амӑшне кӑкӑртан пӗҙӗкҫеҫҫӗ аллипе вӑратма. Анҙах ывӑннӑ амӑшӗ туймарӗ. «Ӑ-ӑ-ӑ-ӑ!»—ҫывӑрса кайрӗ аҙа та амӑшӗ ҫумӗнҙе, ҫырмаран илтӗнекен йурӑпа пӗрлешсе.

Йăвара ларакан тăрри те лăпăстатрĕ çунатпа.

Тетерлĕк тĕрлерĕ улăха. Каллĕ-маллĕ кукăр турĕ сывлăшра. Йурă патне çывхарђĕ йурласа. Йурă йанрама ђарăнсан кăна кайрĕ йăвине.

— Тĕлĕкре тĕлленђĕç пуљ ку йурра леш айккинђе!—хĕпĕртесе сăмахласа илђĕ йурă пуçлакан сарă ађа, йуррине вĕçлесен.

— Пĕрпĕр хĕр илтрĕ пулсан—çывăраймарĕ пуљ.

— Кам йумах ăсти?

Йурă пĕтнĕ хыççăн шавлама тытăнђĕ канăçлăх халăх. Вăхăта ахаљ иртересшĕн мар пĕрре те. Кашни саманта сăнђăрласшăн хăйсене.

— Йумах мар. Ђăн пулнине каласа парам,— вăрахăн пуçларĕ йумаха пĕри.

— Кала!

— Кала!—йанрарĕç кĕтекен сасăсем.

— Вăт, йулташсем! Çакăнта авал пуртă кĕми сĕм вăрман пулнă. Епĕ астăвасса та йумансем нумайђђĕ çакă вырăнта. Пирĕн аттесем мăйăра çӳренĕ кунта пĕрмайах. Çакăнтан тăвалла шĕшкĕллĕх пулнă. Нимĕнле йалсем пулман ку таврара. Ђи малтан пирĕн йалтан пирĕн йал Çĕрпел килсе вырнаçнă çак сĕм вăрмана. Темиçе çĕр çул та иртнĕ унтанпа.

Пирĕн йал Çĕрпӳ хули патĕнђе пулнă. Унта пирĕн асаттесен аслашшĕсем Çĕрпӳ хуçине ĕç-

лесе пуранна. Питĕ те кансĕр пулнă пурăнма. Пĕр кун ĕçлени—çитмен пĕр кун пурăнма.

Çавăнпа та пĕр каçхине килçурђĕсене пăраххсах тарнă пирĕн йалсем çак вырăна,—хăш хуйхăрса илђĕ халапçă вăрăм шухăша кайнă пек пулса.

Йал-йыш ун ђухне нумайах пулман. Йанкар çырми тăрăх ларнă вара Çĕрпелсем. Çакăнтан вара пуçланнă пирĕн йал...

Ун ђухне тавралла вăрман. Çунтармалли вутă вĕсем пусма вĕçĕнђех хатĕрленĕ. Çуртне те тунă çавăнтах. Кашкăрсем аптăратађђĕç, тет хăш пĕр ђух. Урăх хăрамалли те пулман. Çĕр акма кунталла килмен. Хăйсем килнĕ йеннелле Çĕрпӳ йенелле тухнă. Хăйсенђен шалта кам та пулин пуррине асине те илмен. Кашкăрсенђен хăранă пулсан та выљăхсене йанă вăрманах.

«Му-му-му-му-му-у!»—çĕр çĕмĕрттерсе килет, тет пĕрре Пайтукан ĕни вăрмантан. Илтĕнет, тет сасси тискерĕн катаран.

«Путĭ арçури утланнă, йе кашкăр тулланă»—хăраса ӳкрĕ тет Пайтукан. Урамра ларакан халăх та шикленђĕ тет сасартăк.

Ĕне çитсе кĕђĕ тет çĕмĕрен пек. Хăлхисем çук. Хӳрине татнă. Çиллисем çурăк. «Куна мĕн пулнă» тĕлĕннĕ халăх. Арçури—арçури мар.

Кашкăр—кашкăр мар. Пурне те çĕçĕпе йĕрленĕ. «Йе таркăнсем ĕçленĕ».

Шăнарайман Пайтукан çиллине. Пухнă хăйпе пĕрле йулташсем. Илнĕ йуман сенкĕсем. Кайнă вăрмана ĕне йĕррипе. Кайнă-кайнă, кайнă-кайнă. Шалтан-шала, шалтан-шала. Лăп çитсе тухнă пĕр пĕҫĕк йала. Унҫҫен те пулман—хупхура,çăнламас вуникĕ йытă çавăрса илнĕ вĕсене. Тарас—тарма çук. Çавăртсах илсе кĕнĕ çав йăтăсем хăйсен йалне етем пек.

Лĕҫĕрех кукленсе аннă тет Пайтуканпа йулташĕсем. Ухăсемпе хирĕç тухнă вĕсене йал халăхĕ. Пурте палламан, тискер пулнă çыннисем. Темĕн ҫухлĕ шыраса та пĕр ҫăваш курăнман. Пурте çамрăк маттурскерсем. Пурте кăтра, вăрăм, шурă çӳçлĕ. Çивĕҫĕсем пулнă пилĕкрен. Куçĕсем çутăхнă çăлтăрла.

— Камсем пулнă вара вĕсем?

— Кĕленҫе савăтĕнҫе ĕçлекенсем[1]) Тытса кĕнĕ вара Пайтуканпа йулташсене савăта ĕçлеме. Виçĕ кун ĕçлеттернĕ савăтра. Виçĕ кун ĕçленĕшĕн тӳленĕ тет çавах укçа пĕрер пус. «Кашкăртан тарнă—упана çакланнă» çакă пулҫĕ пуђ ĕнтĕ пирĕн ку Çĕрпӳрен тарса кунта çакланни» терĕ

1) Шахтă çывăхĕнҫе Апрăк йатлă вырăн пур. Унта кĕленҫе совăҫĕ пулнă. Вырăнĕ халђ те лайăх палăрать. Екскурçсисемпе те çӳреççĕ вăл вырăна.

тет те Пайтукан, ларса макăрҫĕ тет нумайҫҫен. Кĕпи ҫанни йĕп-йĕпе пулҫĕ тет вĕри куҫҫулҫпе.

— Ăнта. Питĕ те кансĕр пурнăҫа кĕрсе ÿкнĕ вара Ҫĕрпелсем каллех. Вăхăтăн-вăхăтăн улпуҫĕ йала пыраҫҫĕ, тет. Унăн шап-шурă лаша пулнă. Хăй ҫав лаши ҫине утланаҫҫĕ, тет. Шурă вăрăм ҫивĕтлĕ тарҫисем ҫĕлен пек хура лашасемпе умран та, хыҫран та ҫĕре кисретсе пынă. Вуникĕ хура йытă малта выҫаса пынă... «Ну, корова не плачет».—ыйтаҫҫĕ тет йаланах Пайтуканран мăшкăласа.

Пĕре, Ҫĕрпелсене савăта илсе пынă ҫух, савăтра темиҫе ҫăваш харăс ĕҫлесе тăнă. Ҫĕрпелсем тĕлĕнсех кайнă: «ăҫти ҫăвашсем есĕр, хăш йенҫе пурăнатăр?» ыйтса тĕпҫенĕ. Леш ҫăвашсем халҫхи Уравăшпа Хирпуҫсем пулнă. Кунта вĕсем пĕрпĕринпе лайăх паллашнă. Улпута хирĕҫ тăма та каварлашнă. Анҫах, вăрăм ҫилхеллĕ тарҫисемпе йыттисенҫен хăранă.

Выҫăхсене вăрмана йама пăрахтарнă. Тарҫисем ĕне хÿрисене каса-каса йанă. Ҫиллисене, хăш пĕр ҫух ҫарисене ҫура-ҫура пĕтернĕ. Сахалах мар пуса-пуса та ҫинĕ. Пăру-мĕн, сысна-мĕн вăрмана йарсан кайалла таврăнман. Тирне сĕвнипе те ҫитмен вĕсене—ҫийелтен тăвар сапса йараҫҫĕҫ, тет.

— Ех, ҫуниллисем. Ма вĕлерсе пĕтермен вĕ-

сене ун ђухнех? Ах, хам пулман!—ђунĕ тăвăрланнипе ура çине сиксе тăђĕ пĕр çамрăк кађђă. Çаннисене тавăрса йунарĕ сывлăша.—Тыткаланăпă халђхи халăх пулсан,—каллех лăпланса ларђĕ хăй вырăнне.

Унђухнех тыткаласшăн пулнă ăна. Пайтукан, хăйĕн пăрушне тăвар сапса йарсан, ернипе сыхланă йăвăç тăрринђе. «Хăй вилем, хăй ђĕрĕлем» тесех тухса кайрĕ, тет хăйĕн кусарне çивĕђлесех. Анђах нийепле те тĕл пулайман. Улпута тытас вырăнне, хăй çакланнă ун ђухне те. Улпут йыттисем шăршăпа пырса тупрĕç, тет. Унтан йыттисем улпуђĕ патне хăйсемех илсе кайнă. Икĕ кун ĕçлеттернĕ Пайтукана арманта.

Хамăр шыв ăсатпăр «Павар çăлĕнђен». Вăл улпутăн арман авăртакан вăйлă шыв пулнă. Халђ те вăйлă йухат вăл. Анђах ун ђухне тата вăйлă йухнă. Виçĕ ђул авăрнă таттисĕр. Хăйне илсе кайиђђен çав çăла улăм тултарнă[2]).

— Ăçта илсе кайиђђен?...

— Тăхтăрха. Çитĕпĕр унта та. Çиђĕ лав кĕнĕ тет çав çăла улăм. Улăм çинђен вара арман ђулĕсем йанă. Тин вăрахăн кăна йухакан пулнă вăйлă çăл. Шывпала йăванса тухакан улăм пĕрђисем вĕсем улпут йарса хăварнă улăмсем ĕнтĕ. Ахалĕнђен мĕнле улăм тухтăр таса шывранах...

2) Халђ те улăмсем тухаççĕ çăлĕнђен, вăйлă çăл.

Ҫав шывӗ Санара тухнӑ ҫӗрте леш айккинђе лупам. Вӑл пулӑ кӳлли пулнӑ улпутӑн. Етем пек йарӑнса ҫӳређђӗҫ, тет пуллисем. Ухӑсемпе тытнӑ ун ђух вӗсене. Шыва кӗрсе тытмалли май пулман. Унта етем кӗрсе курайман. Шыва ҫурса ҫӳређђӗҫ, тет. Питӗ хӑрушӑ пулнӑ. Айӑплӑ ҫынсене ҫавӑнта йанӑ[3]) Вӑт, ҫавӑ вара пулнӑ тамӑк. Халђ пире пупсем хӑратакан тамӑк—ҫук тамӑк. Вӑл мӗн...

— Ђӗрӗ ҫыннах унта пӑрахайман пулђ те?..

— Ђӗрӗ ҫынна пӑрахнӑ ҫав. Вӑл улпут таврари халӑха хӑй аллине ҫавӑрса илнӗ. Унтан ыйтмасӑр хӗрте кађђа кайма пултарайман; арҫын та авлама пултарайман. Мӑшӑрланас пулсан ун патне пырса «расрешени» илмелле пулнӑ. Кайран тин мӑшӑрланма пултарнӑ. Улпут мӑшкӑлӗ айне пулас мар тесе, пирӗн йалсем пӗр хӗрпе кађђӑ унтан ыйтмасӑр мӑшӑрланнӑ, тет. Кайрантан кайран пӗлнӗ тет ҫавсене улпут. Ђӗнтернӗ хӑй патне. Малтан салантарнӑ иккӗшне те. Темӗн те мӑшкӑласа пӗтернӗ вӗсенђен. Кађђине малтан туллаттарнӑ йӑтӑпа. Унтан ђул ҫыхса йартарнӑ пулӑ пӗвине. Хӗрне пӗрикӗ кун асаплантарнӑ кађђӑ хыҫӑнђен. Тарҫисене мӑшкӑлаттарнӑ ђеретпе. Пӗлми пулсан кӑна та йанӑ пӗвене. Виҫӗ кун ӗҫрӗ, тет вара хӑйте савӑнса кун хыҫҫӑн.

3) Етем шӑммисем тухаҫҫӗ вӑл вырӑнтан.

Хĕрĕн упăшкипе çывăраҫҫен—малтан улпутпа çывăрмалла пулнă. Упăшки аллине лекетҫен малтан хĕр улпут аллине лекнĕ. Çавăнпа та каҫҫăсенҫен ҫăтайманнисем те пулнă. Сӳстермесен кĕçĕн ывăлĕ çав вăхăтра улпут патне çĕмĕрсе кĕме тăнă пулнă та, уншăн йăвăç çумне çыхса ухăпа персе пăрахнă. Виллине вара çав... пулă пĕвинех йанă. Ҫылай етем çăтнă пуљ вăл пĕве... Ҫылай çынна макăртнă.

— Нта, латнă илсе кайса вĕлернĕ ăна...— сассине хăпартса, мăнкăмăлланнă пек, хĕпĕртенĕ пек каласа хуҫĕ Çĕрпелсем.

— Хăйне Шупашкара тытса кайнă. Вăл унтан тавăрăнайман вара. Тарçисене хăвала йанă вара Уравăшсемпе пирĕн йалсем. Савăтне çунтарнă. Пĕвине татса йанă. Çурҫĕсене хăшне пĕрне çунтарнă, хăшне пĕрне килĕсене турттарнă урса çитнĕ халăх. Уравăшра хаљ те пурăнаŷ-ха пĕр кĕлеҫĕ. Нихăçанта çĕрес çук. Питĕ те çирĕп вара. Пуртăпах татса тунă пĕренисене. Вăл вăхăтра улпутăн та пăҫкă пулман иккен.

— Та пулнă самана.

— Епĕр хаљ мĕн. Ĕçлетпĕр. Кунне сакăр сехетрен ытла ĕçлеместпĕр. Акă хаљ канса, йумах çапса ларатăр. Çав хушăрах пирĕн хаçат-шур налсем те пур. Хамăртан аслисем вăрçмаççĕ. Йа-

ланах пире ӗҫре пулӑшма хатӗр. Ӗҫ укҫи те сахалах илместӗр. Ӗлӗк пулсан—кунӗпе ӗҫле...

— Кунӗпе мар, талӑкпе те,—йусарӗ йулташӗ.

— Та, талӑкпе ӗҫленӗ ҫав. Виҫӗ талӑк ӗҫленӗ те пӗр пус илсе тавӑраннӑ. Хаҫат вырӑнне ҫупкӑ. Канӑҫ вӑхӑт вырӑнне нухайкка выљанӑ ҫурӑм тӑрӑх. Арӑмна малтан улпута пар. Ҫийес ҫӑкӑрна та ӑнах пар. Выљӑхне те тӑрантар унӑнне. Ҫийелтен тата сан выљӑхсене хисеплемесӗр тирӗсене сӗве-сӗве йанӑ. Мӑшкӑлтан та мӑшкӑл пулнӑ ҫав иккен.

— Снађђӑт, кунта ӗлӗкех хапрӑксем пулнӑ?

— Хапрӑк пулнӑ. Хаљ епӗр шахтӑ тӑватпӑр. Анђах, ун ђухне хапрӑкпа хаљхи шахтӑ хушшинђе тӗпсӗр тинӗс. Ун ђухнехи хапрӑк—йун хапрӑкӗ пулнӑ. Пирӗн шахтӑ—ӗҫхалӑх ђӗри...

— Ťањ-ťањ-ťањ-ťањ-тањ-тањ!—шахтӑ умӗнђи пӗђӗк ђан йантӑрарӗ ђӗнӗвле. Пиҫӗк куҫлӑ, пӗђӗкрех ҫын туртрӗ ӑна кантраран. Куҫӗсенђен шыв йухнине шӑлса илђӗ ҫаннипе. Ҫур ҫӗр йенне пӑхса тӑрса утасларӗ мӗлкине.

— Ек-кей. Ђасси те кирлӗмарӗҫ мана. Иншенерсен ђассипе пӗр вӑхӑт,—мӑкӑртатса пӑрӑнђӗ ђан кутӗнђен сылтӑм йенелле...

— Карп!

— Йӑван!

Харăс-харăс пусса утрĕç шахтă ăшнелле. Мĕншĕн тесен, шахтă ăшне пурте харăс кĕмелле.

Шахтăсенҫе етем йышĕ вĕлле хурҫ пек вĕлкĕшет. Мăлатуксем ҫулсем ватни тула уççăн илтĕнет. Вакунеткă кĕмсĕртетни çĕр хăвăлне кисретет. Рапоҫҫийĕн вирлĕ алли çирĕп ҫула тĕпретет. Хул кăкĕнҫен вăйăн палли мăкăлҫт-мăкăлҫт выльанаť. Шĕвĕр вĕçлĕ мăлатука антараť те хăпартаť. Çĕр айĕнҫи çирĕп ҫулĕ ваккăн-ваккăн саланаť. Кăпăр-кăпăр вакунеткă тула тухса купалаť.

Çирĕп ҫулсен çӳллĕ купи пĕлĕт патне кармашаť. Фосфоритăн шахтă ĕçĕ çапла тĕслĕ аташаť.

Тĕнҫе пуçĕ—сарă хĕвел пуç тӳпинҫе вăй выльаť. Вăрахăнах шăва-шăва каçалана сулăнаť.

Йака пуçлă ыраш пусси хумăн-хумăн хумханаť. Хăйĕн капăр тумĕпеле мăнкăмăллăн мухтанаť. Сарă тĕслĕ çилхисене варпуççи пек йакатаť. Çутă, çивĕҫ çурлапала ĕнси хыçне çаратаť. Вăштин-вăштин нӳрĕк сывлăш çамка тарне типĕтет. Çав хушăрах витĕр тухса ыраш пуçне шĕкĕлҫет.

* * *

Шахтăра. Пĕр пысăк мар шăтăк ту хĕрринҫен кĕрет çĕр айне. Катаран курăнмасť вăл ытлах. Ун умĕнҫе выртакан фосфорит купи кăна палăртаť унта мĕнте пулин пуррине.

Шахтă шăтăкĕ умĕнђе пĕр пўрт. Вăл та пулин илемсĕр. Ђуна туртмасӑ нимĕн те хăй йенне. Анђах, рапођђисем йуратаççĕ вăл пўрте. Унта—ђиталђнă.

Çакăн пек вара «Санаруй» шахти. Çакăн пек тул йенђен пăхма.. «Уравăш» патĕнђи шахтă, теççĕ ку шахта хут çинђе. Анђах вăл Уравăш мар, Санаруй шахти пулаӑ. Шахтăн тĕп вырăнĕ—Санаруй. Шал йенђе йышланаӑ йышĕпе. Сылтăма, сулахайа, малалла, кайалла вакласçĕ шăтăксем. Анђах кашнинђех ĕçлеççĕ пĕр ĕçех. Фосфорит кăлараççĕ вĕçĕмсĕр.

Хăрушшăн туйнаӑ кĕнĕ ђух шахтăра. Пĕђĕкçеççĕ йупасем, тĕкĕленĕ хăмасем. Çĕр мунђа пек туйăнаӑ пăхсассăн.

— Çак тĕкке илсен?..

— Мĕн пулĕ вара?

— Йăтăнса анаӑ. Айала пулатпăр... Мĕн пур çирĕплĕхĕ те çав тĕкĕсем çинђе.

Унта та кунта, кашкăр куçĕ пек, çутатаççĕ хунарсем. Пĕртен пĕр çутă вĕсен шахтăра. Урăх çук кунта çутă. Тискер. Йутă.

— Хунарсемпе çеç кансĕр мари ĕçлеме?

— Електритсă пулаӑ.

Кĕнĕ ђухнех йанăраӑ ĕç сасси. Вакунеткă, мăлатук, саступ кĕрлеççĕ шахтăра. Кисренет кăна сывлăш ĕçхалра. Шахтă—ĕç йави.

— Ăх, ăх, ăх,—ахлатса касаҫ ҫул ҫине рапоҫҫи.

— Йăлт, йăлт,—курăнаҫ ҫулран ҫутă хĕм.

Шĕвĕр мăлатук парăнтараҫ ҫирĕп ҫула. Ҫул парăнаҫ, вакланаҫ. Вак катăксенҫен пулаҫ вăл пĕр купа. Кун пек купасем пĕрре мар, темиҫе шахтăра.

Вакунеткă урапиҫем ташлаҫҫĕ. Сăвăлаҫҫĕ вĕсем ĕҫе.

— Шăкăр-шăкăр-шăкăр—илтĕнеҫҫĕ урапа сассисем патран. Ҫемҫенĕн, илемлĕн пек туйăнаҫ патĕнҫен. Ҫавах та пулин йантăраҫҫĕ шахтăна. Шахтă ҫĕтресе кăна лараҫ сасăпа. Ĕҫ кĕввипе ташлаҫ нӳрĕ сывлăш. Уҫҫăн-уҫҫăн илтĕнет ĕҫ йурри:

Пирĕнпеле тавлашма йĕс таканлă ут кирлĕ.
Ҫак ҫулсене ваклама питĕ ҫирĕп вăй кирлĕ».

— Каҫ, каҫ!—ларҫ мăлатук ҫул ҫине. Хул вăйĕ ташлатаҫ мăлатука.

Ҫамкаран йухакан вĕри тар шăлмасăр типĕнет ҫавăнах. Ҫĕр сывлăш йышăнаҫ ăна хăй патне.

Ҫаннисене тавăрнă маттур ал ĕҫлесшĕн вĕҫĕмсĕр. Хул вăйĕ сикет сикмеллех.

— Тавай тавлашатпăр, Мĕкĕте!

— Мĕнле?

— Пĕр сехетре кам мĕн ҫухлĕ кăлараҫ?

— Тавай?

Ӑмӑртмалла сикеççӗ мӑлатуксем. Ӑмӑртмалла çиçет ђул çине çутӑ хӗм. Ӑмӑртмалла ванаӗ çирӗп ђул. Ӑмӑртмалла купаланаç вак ђулсем.

Вакунеткӑ канӑççӑр туртаӗ тулалла. Шал йенђен тасатаӗ. Тул йенне купалаӗ. Катаран курӑнаӗ вӑл купа. Кайаӗ вӑл савӑта вакунпа. Вӗçӗмсӗр ӗç. Вӗçӗмсӗр пурлӑх. Ђӑваш пуйанлӑхӗ—ылтӑн.

—Тут, тут, тут!,—сасӑ параӗ вакун тапранса.

— У, у, у!,—кӗрлет ун сасси шахтӑра. Савӑнса, карӑнса йулаӗ шахтӑ вакунран.

* * *

Салхуллӑ çанталӑк. Кӗрхи кун. Хӗвел йӑпатмасӗ выђатса. Кӑвак-хура пӗлӗтсем карса илнӗ ун сӑнне. Хӑй хватне çапах та çухатман вӑл пӗтӗмпех. Каçхине ӗнтӗркенӗ çӗр вӑраххӑн çемçелет кӑнтӑрла тӗлнелле.

Ђунӑм савмасӗ çанталӑка пайан кун. Çанталӑк вӑл тискер. Анђах, кӗнӗ савӑклӑ. Кунӗшӗн, кунӗн ђапӗшӗн хӑвӑртлатса ташлаӗ кӑкӑрта ђӗре. Сивӗ çил питрен пырса сӗртӗнни те çилӗ хывмасӗ ђӗрене. Ура питне тухакан пылђӑк та перӗнмест вӑйхала.

Уй варӗнђе ларакан тӑлӑх çурт та хывнӑ салхуллӑ тумтирне. Салху тумтирӗ çук ун çийӗнђе. Кулнӑ пек туйӑнаӗ пайан кун ку çурт. Туй арӑмле вӗçтерет хӗрлӗ тутӑр çилпеле. Кӑђӑк туртса

ташланӑн туйӑнаҫ патне ҫывхарсан. Кӑҫӑк туртаҫ ҫав. Кӑҫӑк туртсах ташлаҫ савӑнса.

Шахтӑ ӗҫлемест пайан. Шахтӑ канаҫ. Шӗвӗр вӗҫлӗ мӑлатуксем ташламаҫҫӗ ҫул ҫинҫе. Хутлӑ' ҫиҫӗм ҫиҫни курӑнмасҫ нихӑш кӗтесре. Хунарсем кӑна унта та кунта тӗксӗмӗн ҫутатса «йӑлтӑрти вӑйӑи» выљаҫҫӗ пӗрпӗрин хушшинҫе.

Тӗлӗнмелле. Мӗнле тупаҫҫӗши хӑшпӗрисем каласма сӑмахне. Пӳрт тулли халӑх—рапоҫҫисем. Пӗри те ахаљ лармаҫҫӗ. Вӗҫӗмсӗр сӑмах сапаҫҫӗ. Хӑшӗ йумах йараҫ. Ҫавӑнтах вӑйӑсем те выљаҫҫӗ.

— Петӗр, кил шашкӑлла!

— Тавай шахмӑтла!

— Пӗлместӗп вӗт.

— Вӗренетӗн.

Икӗ рапоҫҫи кӗрсе лараҫҫӗ шахмӑт сӗтел хушшине.

— Карте...

— Мат.

— Ҫапла выљас пулаҫ вӑт.

Пӗри параҫ. Тепри хӑвалаҫ. Хӗстерсе ҫитерет паттӑрри йулташне. Йулташӗ парӑнаҫ. Лешӗ савӑнаҫ.

— Вӑрҫӑра та ҫавах вӑрҫаҫҫӗ. Пайанхи кун йунккӑрсене пӗҫертрӗмӗр епӗр вунҫиҫҫӗмӗш ҫулта Питӗрте. Ларма-тӑма памастпӑр. Сывлӑш ҫавӑрма йамастпӑр. Пӗҫертетпӗр кӑна...

— Тавай йура йурласа илетпĕр.

— Тавай.

— Кам пуçлаҫ?

— Микулай, пуçла!

— Йерçӳ çук ман, аҕасем. Хăвăрах куратăр — рапоҕкомра вĕт...

— Ах, Толмас пулсан çакăнта... Мĕнле йурлаттăмăрҕҕĕ, йалта ҕух.

Йыш хутшăннăçем хутшăнсах пыраҫ салăра. Вăхăт та çывхарсах килет ĕçе пуçăнма. Вăхăт çитрĕ.

— Йулташсем!

Пурте шăпăртах. Никам ҕĕнмерĕ кăна хирĕç.

— Йышăнăр вырăнсене. Пуçлăпăр!.. Вăхăт!..

Вырăнтан вырăна куçа-куçа ларкаларĕç хăшĕпĕрисем. Иккĕн пырса кĕҕĕç çĕнĕрен.

— Йулташсем, Октапĕр праçникĕ 13 çул тултарнă йаҕĕпе уйавлакан пухува уçнă, тесе шутлатăп...

«Ылханлă, выçăхнă ҕурасен
Мĕн пур тĕнҕи харăсах тăр.
Вăркаҫ пирĕн ăш тӳсме çукран,
Вилиҕҕен çапăçма хатĕр!..»

— Вăт, мĕнле йантрататпăр.

— Пултаратпăр.

— Рапоҕҕи халăх вĕт. Не шутти, прат.

Паçăр шахмăтла выԻакан икĕ вăтам та, патвар кĕлеткесем пуплесе илԻĕç пĕрпĕринпе çурмаса-сасăпа. Йăли кулса илԻĕç пĕрпĕрин çине йăвашшăн та, ăшшăн пăхса.

«Вунвиçĕ çул хушшинԻи çитĕнӳсем»... Йăвăрлăхсемсĕр, кĕрешӳсемсĕр пулса пыман вĕсем пирĕн. Пирĕн икĕ фронтпа та çирĕппĕн кĕрешсе пымалла... сылтăмрисем... Пуххарĕн, Рыкков, Томски... Çлепков...

— Клас питне çухатакансем!

— Парттирен!..

«...Пирĕн хамăр рете çирĕплетсе, малалла та...»

— Парттийе кĕрсе ответлетпĕр!

— Закрепим до конца пятилетки!

— Вот наш ответ.

ТоклаԻĕке калама памасăр ответ параççĕ хаваслăхпа вĕриленсе çитнĕ рапоԻԻисем. Իăтаймаççĕ вĕсен Իĕрисем.

Токлат хыççăн парнесем. Кам хăй вăйне ĕçре палăртса мала тухнă—парне!

— Çеркейĕв, Карп ИвановиԻ!—преçитиум сĕтелĕ патне Իĕнет рапоԻком претçетаттĕлĕ Никколай Архиппăв.

— Епĕ!—ответ парать халăх хушшинԻен пĕр вăрăм, йаштака, сарă, çамрăк çын ура çине тăрса, хăйне кăтартса.

— Кунта кил!

Ҫав вăхăтрах Карп ҫывхарса та ҫитет преҫитиум сĕтелĕ патне. Маттур ҫын—уттинҗен паллă.

— Карп Иванҗ пирĕн хушăра пур йенҗен те малта пыракан рапоҗҗи. Шахтă уҫăлнăранпа ĕҫре ăна ҫитерекен пулман ку таранҗҗен. Ҫавăнпа та ăна «Ĕҫ паттăрĕн ортĕнне» паратпăр!— ăнлантарать халăха Архиппăв й.—Карп Иванҗ, есĕ ҫак хаклă йапалана ху ҫумна ҫыпăҫтарма тивĕҫлĕ рапоҗҗи пулатăн. Есĕ ху паттăрлăхна палăртрăн пирĕн хушăра. Малашне ҫак ортĕна мухтавлă тивĕҫпе ҫакса ҫӳре. Ҫакă пултăр сана пирĕнтен парне. Есĕ: «ĕҫ паттăрĕ». Ан ман. Малашне те паттăрăн ĕҫле, примерлă пул!—ортĕна Карп кăкăрĕ ҫине ҫыпăҫтарҗĕ Архиппăв йулт.

— Ĕҫ паттăрĕ йатне тивĕҫлĕпе илтĕм пулсан, тивĕҫлипе малашне те сыхлама тăрăшăп. Ҫак анҗах ман ответ. Епĕ...

Хĕпĕртенипе, хурланнипе сасине җĕтретсе ответлерĕ Карп. Татах та темĕн калашăнҗҗĕ вăл. Анҗах сăмах тупаймарĕ, хурланҗĕ.

Парне. Тĕрлĕрен парне. Җылайĕшĕ илҗĕҫ тĕрлĕрен йапала. Анҗах, ортĕн пĕрре ҫеҫ!

Кашни парне витĕнет ответпа. Кашни хăй пек ответлет:

— Утарнĕке ҫырăнатăп.

— Парттине кĕрсе ответлеп.

— Пилĕк çуллăх план пурнăçа кĕрсе çитиҫҫен хама шахтă çумне çыхатăп.

— Плана тултарма пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме тăрăшăп.

— Хам хут пĕлменлĕхе пĕтерĕп.

Вăт мĕнле ответлет рапоҫҫи ҫĕлхи. Ак йепле тапаť ĕçхалăх ҫĕри. Тăшман, илтетне?! Ак, епĕр йеплеǃ..

«Çакă пирĕн йулашки, татăклă çапăçу
Интернатсионалпа етем йăхĕ ҫĕрĕлĕ!»

Савăнăçлă каçăн йулашки сăмахĕсем шăранҫĕç йурăпа. Йурă—çинçен те, уççăн «Санаруй» çырми тăрăх йантрарĕ икĕ йенелле. Ҫылайҫҫен итлесе тăҫĕ «Апрăк» кĕперĕ çинҫе Вăрнартан тавăрăнакан Йемеле.

* * *

Инçетрен, сарлакан, пуйан та ҫаплă, Сăр шывĕ ик йенпе, выртаť сĕм вăрман. Урлăшĕ-тăршшийĕ вĕçĕмсĕр аслă, çавăнпа та ун виттĕр никам тухайман. Сăр шывĕ, сар хĕр пек, йапшарăн йухса, вăрмана йăпатса ҫупнă Атăла. Хырсем, ҫăрăшсем, капăр хĕрсем пек, Сăр çине пăхса йусаннă тек-тек. Планĕсем, луçĕсем кĕтўпе çўресе вăрмана çĕмĕрнĕ, пĕртте хĕрхенмен. Лĕпсĕркке упасем çемйипе тухса çимешкĕн хăвнă мĕскĕн мулкаҫа... Сĕм вăрман ун ҫух картана палламан; хаљхи пек пулман укăлҫа...

Кам йуратмĕ илемлĕ вăрмана... Тĕрлĕрен кайăкĕ савăнса, кулса, йурра шăрататť тĕнђене савса... Çу вăхĕтĕнђе сарлака çулçăсем питрен шăлаççĕ ырă шăрш парса. Куçа çийекен сарă ђеђексем ырă кун сунаççĕ пуçсене тайса. Савнине илнĕ пек ытампа илсе, кăмăлпа ђуп тăван тутине ĕмсе. Мĕн тесен мĕн çук. Вăрманти пурлăха каласа пĕтерме никамăн ђĕлхи сăмах тупас çук. Çак вăрманта ĕнтĕ колхоссем-комунсем, тĕрлĕрен йалсем, ертелсем мĕнсем тымарсем йанă хăватлă ку ђух.

Хусантан Мускава тимĕр çул кайаť. Вăл та Сăр вăрманĕ виттĕрех тухаť. Кăтмартан катмар стантсă çурђĕсем мухтавлă лараççĕ вăрман варринђе.

Вăрнар. Вăрнар стантсийĕ. Çирĕм çул кайарах çурт палли пулман. Никам кунта пурăнма шутламан Хаљ, пăх та кур: хула.

Хула. Промышленнăй хула. Иртен пуçласа каçхине тĕттĕмђен йантăраť ĕçйурри.

Кирпĕђ çине хурăнђĕ кирпĕђ. Йăвăçĕ те парăнмарĕ кирпĕђрен. Иншенерсем кунта çивĕђ. Кўнĕ вĕсене ĕçе пĕлнĕрен.

Акă таçтанах курăнаť çўллĕ çурт, кирпĕђрен те йăвăçран та купаланă темиçе хут. Çакă пулаť çĕнĕ савăт. Фосфоритна йар та кăшăлтаттар— авăрт.

Пĕђĕкçеççĕ çурт мар вăл савăт. Пысăк, катмар çурт. Ăшăнђе тĕрлĕрен машшин. Пĕр çĕртен кĕрет фосфорит ђул халлĕн. Тепĕр çĕртен тухаť вакланса. Çавăнтах йарса тытаť тепĕр урапа, вĕлти-ваљти çавăрăнаť çутатса. Фосфорит тийет вулака. Вулак ăсатаť урăх ђул айне. Ђул баклаť, вĕтетет фосфорит вĕт ђулне... Вĕтĕ ђул васкаса ђупаť тепĕр вырăна. Çапла вĕçĕмсĕр ĕçлет машшин. Вĕçĕмсĕр ђупаť, ташлаť фосфорит.

— Çĕртен килтĕм. Çĕре кайап! Йăхăр-йăхăр! Вĕшт вĕшт! Пăст-паст!—пуплесе тухаť фосфорит савăтран.

— У-у-у-у!—йан йараť савăт сассине вăрмана. Вăрманти сывлăша ђĕтретет катана. Кăмерттон сасси пек çухалаť хырлăха.

Савăт сасси вăратаť ыйăхран. Ђĕнет вăл ĕçе хăй патне. Йăхăраť ĕçлеме.

Йăхравçа итлеççĕ. Васкаса, вăшкăртса, умлăн та хыçлăн пухăнаççĕ вăхăта. Ĕç сăвăлаť. Сывлăш алă çупаť. Ташлаççĕ савăтăн урантсем.

Кунĕн-çĕрĕн авăртат савăт фосфорит. Вĕтĕ ђул йараççĕ савăта йанă ђух. Ђăмлаť вăл вĕсене хĕрхенмест. Кăлараť вĕтетсе.

Вĕçĕмсĕр лавсем... Вĕсемпех трактăр. Пурте тийенĕ фосфорит.

— Хăваларах пар, йăпат. Каçђен тепре хут-

лас!—хёвел кăнтăрларан сулăннине кура васкатаӗ йулташне Матви.

— Ёлкĕретпĕр!

Савăтран шахтăна хывнă тимĕр çул. Çинçен те тӳррĕн выртаӗ çутăхса. Пĕђĕкçеççĕ пăравус туртаӗ çирĕп ђул, вакунеткăсем ђупаççĕ харсăрлатса.

— Тăпăрт-тăпăрт-тăпăрт-тăпăрт! — ташлаççĕ урăписем пăравус хыçĕнђен.

— Ши-и-и-и!—шăхăрса кăна выртаӗ çинçе тимĕр çул.

— У-у-у-у!—çухăраӗ пĕђĕкçеççĕ пăравус савăта курса. Унăн сасси йанăраӗ вăрмана. Хуллен те, çинçен çухалаӗ катана.

Йаштак хырсем пуç тайрĕç пойăса. Кăтра çӳçлĕ хурăнсем аванђĕç пилĕкрен. Çатăлти ăвăссем алă çупрĕç савăнса.

— Хăвăртрах кил, хăвăртрах кил!—кĕтсе илђĕç пойăса.

— У-у-у-у!—ырă сунђĕ пĕђĕкçеççĕ пăравус тепĕр хут. Унăн сасси каллех йантрарĕ вăрмана. Каллех хуллен те, çемçен çухалђĕ катана.

---

Отпечатано в тип. № 1 Чувашгиза г. Чебоксары.

Уп. Чувашглавлита № 1148 Заказ № 2637 Тираж 5.000 экз. 5 п.л

Хакĕ 24 пус

С. Толмасов. ФОСФОРИТ

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
Чебоксары 1931